# Шкул столовăйĕсенчи çитменлĕхсене прокуратура тупса палăртнă

• 3 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

5(823) №, 2014, нарăс, 8

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электрон адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

Чăваш балеринин ячĕ совет театрĕн историне ылтăн сас паллисемпе çырăннă. 2 стр.

Хĕрарăм кăмăлне çавăрма йывăр-и? 4 стр.

Тутлă ыйхă вăрттăнлăхĕсем. 8 стр.

Юрату юрлаттарать те… çемьене аркаттарать. 11 стр.



2 стр.

## Чăваш чăваш патнех туртăнать

Йăхташăмăрсем чăваш пулса çуралнишĕн мухтанни çинчен тăтăш çыратпăр. Тĕнчипех саланнă халăхăн пурнăçĕ пире çав тери кăсăклантарать. Йăх тымарĕ, тăванлăх туйăмĕ, аслă ăру пехилĕ пур чăваша та вăй парса тăнине туяс килет.

Украина чăвашĕсем, тĕслĕхрен, 5 обществăна пĕрлешнĕ. Киев, Чернигов, Черновцы, Севастополь, Одесса хулисенче тĕпленнĕ йăхташăмăрсем пĕр-пĕринпе çыхăну йĕркеленĕ. Эстонири йăхташсем 3 ушкăна пуçтарăннă. Латви, Беларуç, Казахстан чăвашĕсен те пĕр сĕтел хушшинче чуна уçса калаçма май пур. Унсăр пуçне Раççей нумай хулинче пур çакнашкал тытăм. Йăхташăмăрсем ытлă-çитлĕ пурăннишĕн эпир те савăнатпăр. Тăван халăха маннă çынна çухалнă пуртă аврипе танлаштараççĕ. Пирĕн йышра ун пеккисем çук ахăр.

Чăвашсем Красноярск тăрăхĕнче Енисей хĕрринче, ял хуçалăх районĕсенче кил-çурт çавăрма тăрăшнă. Вĕсем тăван халăх йăли-йĕркине манăçа кăлармаççĕ. Ăруран ăрăва куçакан юрă-ташăпа ытти наци çыннисене тĕлĕнтереççĕ. Ал ĕç тума, сĕтел янтăлама ӳркенмеççĕ. Хăна пăхма пĕлнипе те уйрăлса тăраççĕ вĕсем. Сăмах май, çак халăх ниçта та кучченеççĕр çӳременнине ваттисен сăмахĕнче те палăртса хăварнă. Ахальтен мар тата чăваш ĕçленĕ çĕрте савăнать теççĕ. Эх, тĕнчипех янăратăрччĕ чăваш сасси!

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

*Хĕл каçасси нӳхрепе анса хăпарасси мар.*

Каларăш.



## Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 08.02 | - 13 | - 11 |
| 09.02 | - 10 | - 11 |
| 10.02 | - 9 | - 7 |
| 11.02 | - 3 | - 4 |
| 12.02 | - 3 | - 4 |
| 13.02 | - 6 | - 12 |
| 14.02 | - 15 | - 20 |

Рита АРТИ сăн ӳкерчĕкĕ.

**«Чăваш хĕрарăмĕ» хаçата çитес çур çуллăха хальхи хакпа çырăнтарма пуçланине аса илтеретпĕр. Пирĕн кăларăма 2014 çулăн иккĕмĕш çурринчен илсе тăмашкăн почта уйрăмĕсенче пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен 243-18 тенкĕпе çырăнма пулать.**

ПУЛТАРУЛĂХ



# Украина театрĕн мухтавĕ

**Харьковри оперăпа балет театрĕн пысăк залĕнче тăвăллăн алă ҫупни илтĕнет. Куракансем: «Маттур!» – кăшкăрса сцена ҫине чечек ҫыххисем ывăтаҫҫĕ. Балерина спектакле килнисене тав туса пуҫ таять. Халь-халь куҫҫуль юхса анасса туять вăл. Ҫавăнпах куҫне чечек ҫыххипе хупласа чаршав хыҫĕнче ҫухалать. Украина тава тивĕҫлĕ артистки Валентина Маркова юлташĕсемпе пĕрле сцена ҫине юлашки хут тухнине паллă тăвать.**

...Унăн ачалăхĕ Шупашкарта иртнĕ. Пĕр ҫемьере 4 хĕр ҫитĕннĕ. Ашшĕ-амăшĕ заводра вăй хунă.

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра Пионерсен ҫуртĕнчи ташă кружокне ҫыраннă вăл. Пĕчĕкренех ҫак искусствăна параннă хĕр ачан кун тата апат йĕркине ҫирĕп пăхăнма тивнĕ.

Ҫав вăхăтра Чăваш Республикин тĕп хулинче 1960 ҫулта уҫăлнă музыка театрĕнче ĕҫлемешкĕн балет труппи йĕркелеме пуҫланă. Ҫавна май пултаруллă ачасене Ленинградри е Пермьри хореографи училищине вĕренме янă. Пĕррехинче Шупашкарти Пионерсен ҫуртне те Пермьрен ятарлă комисси килсе ҫитнĕ. Училищĕре пĕлӳ илмешкĕн Валентина Марковăна, Надежда Павловăна, Регина Кузьмичевăна, Сергей Петрова, Сергей Матвеева суйласа илнĕ.

Пушкăртстан искусствăсен тава тивĕҫлĕ ĕҫченĕ Галина Кузнецова Валентинăна хăйĕн класне йышăннă. Унăн вĕренекенĕсем пысăк ăсталăхпа кăна мар, ҫынлăх енĕсемпе те уйрăлса тăраҫҫĕ. Валентина Маркова эксперимент программине лекнĕ: ыттисем пек сакăр ҫулта мар, улттăрах вĕренӳ курсне ăша хывма лекнĕ унăн. Ĕҫчен те ҫаврăнăҫуллă ҫамрăка ҫакă пĕрре те хăратман. Залран тухма пĕлмесĕр репетицисене хутшăннă, кайран урокселене хатĕрленнĕ вăл.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш ҫулĕсенче Пушкăртстан оперăпа балет театрĕн паллă артисчĕсем сценăна сыв пуллашнă. Балет студийĕ вара ҫак кăткăслăха сиреймен. Пушкăртстан правительстви училище ертӳлĕхĕнчен пулăшу ыйтнă. Ҫакăн хыҫҫăн Галина Кузнецовăн класĕнче пĕлӳ илнĕ ҫамрăксенчен ҫуррине Уфана янă.

Пултарулăх ҫулĕ Пушкăртстан сцени урлă вырăнишĕн ҫав тери кăмăллă Валентина Петровна. 8 ҫул хушшинче балерина куракансене хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтернĕ, ҫемье ҫавăрнă, хĕр ҫуратнă.

1979 ҫулта вĕсем ҫемйипе мăшăрĕн ашшĕ-амăшĕ патне Украинăна куҫса кайнă. Харьковри Н.В.Лысенко ячĕллĕ патшалăх академи оперăпа балет театрĕнче ҫамрăк балеринăна ăшшăн кĕтсе илнĕ. Ĕҫе пуҫăнсанах Дюймовочка партине шанса панă ăна. Кайран «Мауглире» Хĕр сăнарне, «Щелкунчикре» Машенька рольне калăпланă. Унăн сăнарĕсене асăнса та ҫитереймĕн.

Сцена паллă ăстисемпе Татьяна Легатпа, Наталья Дудинскаяпа, Константин Сергеевпа, Морис Лиепăпа, Теодор Попескупа, Светлана Колывановăпа репетицисем ирттерни унăн ăсталăх шайне ӳстерме пулăшнине палăртса хăварас килет.

Валентина Марковăн мăнукĕ Саша та пурнăҫне балетпа ҫыхăнтарасшăн. Вăл иккĕмĕш класра вĕренет.

Пĕррехинче мăнукĕпе иккĕшĕ Мироносицкая урамĕпе иртнĕ чухне 5 хутлă ҫурт ҫинче асăну хăми вырнаҫтарнине асăрханă. Кукамăшĕ Сашăна унта мĕн ҫырнине вуласа пама ыйтнă. Арҫын ача Кокель пирки асăннине украинла васкасах вуланă. «Ҫакăнтах урăх чĕлхепе ҫырни те пур», – ăнлантарнă шкул ачи. Валентина Петровнăна Чăваш Республикинчен аякра – Украинăра – асăну хăми ҫине чăвашла ҫырни тĕлĕнтернĕ. Ҫав ҫуртра унăн ентешĕ Алексей Кокель художник ĕҫлесе пурăннине пĕлни мĕнешкел хавхалантарнă хĕрарăма! Ун ҫинчен мăнукне каласа кăтартнă вăл. Ҫакăн хыҫҫăн Саша та паллă чăваш пулма тĕллев тытнă.

2007 ҫулта сцена ҫинчен кайсан Валентина Петровна ҫамрăксене ĕҫлеме пуҫланă. Халĕ унăн вĕренекенĕсене тăвăллăн алă ҫупса хавхалантараҫҫĕ. Апла тăк Валентина Маркова хăйĕн вăй-хăватне шеллеменрен спектакль ăнăҫлă пулса тухнă. Ҫакă нимрен ытла савăнтарать ăна. «Маттур, Валя!» – тетĕп эпĕ ура ҫине тăрса.

Паллă ҫак балерина пирки ĕҫтешĕсене, юлташĕсене каласа кăтартăм.

**Александр ЧЕПАЛОВ, Харьковри оперăпа балет театрĕн литература пайĕн ертӳҫи:**

– Валентина Маркова ташă сĕмне туять. Вăл ман куҫ умĕнчех ӳссе пычĕ. Ăна аслисем те, ачасем те ăшшăн йышăнаҫҫĕ, мĕншĕн тесен Валентина Петровна кашни сăнарпа куракана чунне витерме пĕлет. Халĕ вăл хăй вĕренет. Ăсталăхне ҫамрăксене парса хăварни нимрен паха.

**Светлана КОЛЫВАНОВА, Украина халăх артисчĕ:**

– Унăн ячĕ Украина кăна мар, совет театрĕн историне ылтăн сас паллисемпе ҫыраннă. Вăл тĕп партисенче нумай ташланă. Халĕ ҫамрăксене сцена ҫинче чунран парăнса ĕҫлеме хăнăхтарать.

«Ентешĕмсене манран – салам! Тăван тăрăха яланах ăшă кăмăлпа пырса каятăп», – тет Валентина Петровна.

**Владимир ВАСИЛЬЕВ,**
**И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн профессорĕ.**

ХАСТАРРИСЕМ

# Ҫармăссем чăвашла вуласшăн

Течĕ районĕнчи Ҫармăс ял вулавăшĕнчен ватти-вĕтти кунĕпех таталманнинчен тĕлĕнмелли ҫук. Ял ҫыннин пушă вăхăта усăллă та интереслĕ ирттерес килет-ҫке.

– Пирĕн ял хĕрарăмĕсем ĕҫ ҫук тесе килте лармаҫҫĕ, – ку тăрăхри лару-тăрупа паллаштарать Лидия Караева библиотекарь. Ҫакăнта пурăнакансем темиҫе ҫухрăмри Пăва хулинчи предприятисене вырнаҫнă. Анчах ҫамрăк амăшĕсемпе ҫыхăннă ҫивĕч ыйту таталман-ха. Ялта садик ҫукран тĕпренчĕкĕсене ниҫта хăвараймаҫҫĕ вĕсем.

Кашни эрне кун йĕпе-сапана, ҫил-тăмана пăхмасăр ашшĕ-амăшĕ ачи-пăчипе пĕрле вулавăша пуҫтарăнать. Пĕчĕкскерсене выляма, вĕренме пĕтĕм услови пур кунта. Вĕсем валли ятарлă сĕтел-пукан ăсталанă, аквариум вырнаҫтарнă.

– Чи пĕчĕккисем сăрласа илемлетмелли, сас паллисем вĕренмелли чăвашла кĕнекесем ыйтаҫҫĕ. Пур-и вĕсем Чăваш Республикинче? Хамăр укҫапа туянăттăмăр, – тет библиотекарь. Лидия Николаевна ача-пăчана вăйă урлă кĕнеке тĕнчипе паллаштарать. Кашни уява пĕрле паллă тăваҫҫĕ вĕсем. Ятарласа сăвăсем, юрăсем вĕренеҫҫĕ.

Мĕн пĕчĕкрен библиотекăна ҫӳрекен пепке кайран та кĕнеке илсех тăрать. «Каникул вăхăтĕнче те ҫакăнтан тухма пĕлмеҫҫĕ шкул ачисем. Ҫил-тăман вĕҫтерни те, ҫула юр хӳсе лартни те хăратаймасть вĕсене», – йăл кулать Лидия Николаевна.

Ал ĕҫĕпе кăсăкланакан хĕрарăмсем те библиотекăра пуҫтаранаҫҫĕ. Килти ĕҫрен пушансан ҫынпа сăмахласа ăша пусарнине мĕн ҫиттĕр? Ҫакăнтах ал ĕҫĕпе аппаланаҫҫĕ, кĕнеке вулаҫҫĕ, тĕрлĕ ыйтăва сӳтсе яваҫҫĕ вĕсем. Унсăр пуҫне пурнăҫ уттипе тан пыракансем компьютерпа ĕҫлеме хăнăхаҫҫĕ. Хăйсен ĕҫĕсен куравне йĕркелессине те йăлана кĕртнĕ вĕсем.

Лидия Караева каланă тăрăх – библиотекăра 4 пин кĕнеке упранать, вĕсенчен 623-шĕ – чăвашли. «Кĕнекепе тивĕҫтерсех тăраҫҫĕ. 2011 ҫулта кăна чăвашла 452 кĕнеке илсе килнĕччĕ», – ăнлантарать вăл.

Апла тăк Ҫармăс ял библиотеки ача садне те, ал ăстисен клубне те ҫавăрннă. Шкулпа, культура ҫурчĕпе тачă ҫыхăнса ĕҫлеме хăнăхнă Лидия Николаевна. Вăл ял халăхне пулăшассишĕн тем тума та хатĕр. Ҫакăншăн хисеплеҫҫĕ те ăна Ҫармăссем.

**Ирина КУЗЬМИНА.**
Тутарстан.

**Страницăна Марина ТУМАЛАНОВА хатĕрленĕ.**

КĔСКЕН

# Кĕпĕрнаттăра ҫăпата парнеленĕ

Мурманскри ҫуллен йĕркелекен наци культурисен уявĕнче чăвашсем вуннăмĕш хут хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă. «Чĕкеҫ», «Тăвансем» ансамбль юрри-ташшине куракансем ҫав тери ăшшăн йышăннă. Йăхташăмăрсем ал ĕҫĕсен куравне те йĕркеленĕ. Мурманск облаҫĕн кĕпĕрнаттăрне Марина Ковтуна та тыткăланă унти япаласем. Чăвашсем ăна асăнмалăх ҫăпата парнеленĕ. Сывлăх сунса пĕрин ăшне ыхра хунă, пуянлăх пехиллесе теприн ăшне кĕмĕл укҫа чикнĕ. Ҫакăн ҫинчен журналистсем вырăнти хаҫатсенче ҫырнă, телекăларăмсенче каласа кăтартнă.

Мурманскри чăваш наци культура автономийĕн ертӳҫипе Раиса Садаковăпа эпир те хамăр вулакансене паллаштарнăччĕ. «Тивĕҫлĕ канăва тухиччен юрласа-ташласа ҫӳреме май пулман. Халĕ чун киленĕҫне пула килте ларма та вăхăт ҫук», – тенĕччĕ вăл Шупашкара килсен. Артистсен ҫи-пуҫне те хăех ҫуса, якатса тăрать хĕрарăм. Ҫĕлет те, тĕрлет те вăл. Раиса Степановна кашни ҫул хăйне ятăн чăваш тумтирĕ ҫĕлесе тăхăнать.

# Чĕлхе мăнаҫлăхĕ

Кăрлач уйăхĕнче Киевра Украинăри чăвашсен общество центрĕ ҫĕнĕрен уҫăлнă. Унта библиотека та пур. Тăван халăх историйĕпе, культурипе, чĕлхипе кăсăкланакансемшĕн центр алăкĕ яланах уҫă. Ҫакăнтах вырсарни шкулĕ те ĕҫлеме пуҫланă. Унта чăвашла калаҫма вĕрентеҫҫĕ.

# Анне ҫинчен юрланăшăн



Таллинн хулинче «Телей кайăкĕн вĕҫевĕ» конкурс йĕркелессине йăлана кĕртнĕ. Ҫак мероприяти тĕрлĕ наци ҫамрăкĕсене туслаштарать. Раҫҫей, Беларуҫ, Латви, Эстони конкурсанчĕсем куракансене хăйсен ăсталăхĕпе тыткăнланă. Вĕсен хушшинче Нарвăри «Нарспи» пĕрлешӳ йышĕнчи Алина Кузнецова та пулнă. Хĕр ача анне ҫинчен чăвашла юрлани пурне те килĕшнĕ. Ҫакăншăн «Наци культурине упранишĕн» диплома тивĕҫнĕ вăл.





САМАХ ПАРĂР-ХА

# Шкул столовăйĕ – общество апатлану вырăнĕ мар

Алина ИЗМАН

**«Шкула вĕренме мар, çиме çÿрет пуль, – шÿтлет кĕçĕн класа каякан ачи çинчен каласа кăтартнă май пĕлĕшĕм. – Акă малтан 40, кайран 16 тенкĕлĕх апат илни çинчен смс килчĕ, унтан тата булка туяннă». Шкул апатланăвĕшĕн карточкăпа тÿлеме тытăннă хыççăн тĕпренчĕкĕ мĕн çинине йăлтах пĕлсе тăрать амăшĕ.**

**Чылайăшĕ шкул апатланăвĕнчи çĕнĕлĕхе кăмăлласа йышăнчĕ. Çапах та карточка тытăмне кусăнă тапхăрта Çĕнĕ Шупашкарти пĕр учреждение пăтăрмах пулса иртни пирки сас-хура тухрĕ. Ашшĕ-амăшне хăйсен ирĕкĕпе 200 тенкĕлĕх пулăшу кÿме ыйтса учительсем квитанци валеçсе тухнă. Терминал вырнаçтармашкăн шкула укçа кирлĕ-мĕн. Анчах кун пирки тÿрремĕнех ыйтма пултараймасть-çке шкул: çавăнпа ырă кăмăллăх фондне йĕркеленçи тунă. Паллах, ашшĕ-амăшĕ укçа тÿлеме тÿрех васкаман, тивĕçлĕ çĕре евитленĕ. «Терминал вырнаçтарассипе çыхăннă тăкака тĕрлĕ бюджетран е унта кĕмен укçаран саплаштараççĕ, ашшĕ-амăшĕнчен куншăн укça ыйтман», – çапла хуравланă вĕсене.**

**2013-2014 çулсенчи вĕренÿ çулĕ вĕçлениччен республикăри пур хулара тата хăш-пĕр ялти шкулсенче те карточкăпа апатланасси пурнăçа кĕмелле. Ку енĕпе ĕç тухăçлă пырать – учреждение сен столовăйĕсен 72% çĕнĕ йышши хатĕрпе усă курать, вĕренекенсен 96% шкулта апатланать.**

**Анчах паянхи калаçура ĕлĕкхи мелпе ĕçлекенсем – чĕрĕ укçан апатлантаракан шкулсем – пирки сăмах хускатасшăн. Нумаях пулмасть Элĕк районĕнче командировкăра пулнăччĕ. Çавăн чухне шкула ял тăрăхĕн администраци ĕçченĕсем апатланма çÿренине пĕлтĕм. Директорпа çакăн пирки калаçу пуçартăмăр. «Пирĕн сотрудниксем пекех укçа тÿлеççĕ, вĕсен ăçта çимелле тата?» – хуравларĕ вăл. «Шкул ертÿçин çакăн пирки пуç ватмалла-ши вара?» – тĕлĕннĕччĕ ун чухне. Тĕрĕссипе, кун пек тĕслĕх пĕрре кăна мар асăрханă. Акă, сăмахран, Кÿкеçри 1-мĕш шкула больница ĕçченĕсем кăнтăрлахи апата пынине курсалнă. Пĕлĕшĕм Шупашкарти пĕр шкулта 40 тенкĕпе тăраничченех çисе тухни пирки те пĕлтернĕччĕ. Каферипе танлаштарсан – чылай йÿнĕрех. Анчах вĕренÿ учрежденийĕ общество апатланăвĕн вырăнĕ мар-çке. Апла унта айккинчи çынсем мĕнле майпа ирĕклĕнех пырса çÿреççĕ тата апатланаççĕ? Лару-тăрăва ЧР Вĕренÿ министерствипе çыхăнса уçăмлатма шухăшларăмăр. «Ку тĕллев валли бюджет укçа уйăрмасть, пур ыйтăва та директор татса парать», – хуравларĕ организаци тата информаципе тивĕçтерекен сектор заведующийĕ Марина Столярова.**

**Апат хакне йÿнетес тĕллевпе шкул картишĕнче тĕрлĕ пахча çимĕç туса илеççĕ. Ачасем çăвĕнех тăрăшаççĕ унта. Хăш-пĕр çĕрте фермер е ял хуçалăх предприятийĕ çĕр улмипе тивĕçтерет. Çăкăр-тăвар – хире-хирĕç: ачасем те вĕсене çĕр улми пуçтарма пулăшаççĕ.**

**ЧР прокуратури шкул апатланăвĕ тĕлĕшпе йĕркелĕхе куçран вĕçертмест. Шупашкарти пĕр шкулта кухньăра ĕçлекен харăсах тăватă çыннăн медицина кĕнекин срокĕ тухнă. Йĕрке хуралçисем Пăрачкав районĕнчи шкулта та çитменлĕхсем асăрханă: столовăйра икĕ эрнелĕх меню пулман, блюдăсене рецептпа килĕшÿллĕн хатĕрлемен. Поварсем менюна ашран пĕçернĕ апат кĕртнĕ, анчах унта какай шăрши-марши те пулман иккен. Какай шкул директорĕн пÿлĕмĕнчи сивĕтмĕшре выртнă. Пуçлăх ĕç вырăнĕнче ларманран поварсем пÿлĕме уçса кĕреймен...**

СПОРТ

# Пĕтĕм тĕнче кĕтнĕ Олимпиада



Эльбрус тăвĕ çине хăпарнă, Байкал тĕпне аннă, Çурçĕр полюсне çитнĕ, уçă космоса хăпарнă Олимп çулăмĕ палăртнă вырăна çитрĕ. Ĕнер Сочире Мускав вăхăчĕпе 20:14 сехетре чаплă лару-тăрура XXII Олимпиада уçăлчĕ. 20:14 сехете ăнсăртран суйласа илмен, Раççейре пĕрремĕш хĕллехи олимпиада ирттернĕ куна палăртать вăл.

Уяв Олимп паркĕнче, Хура тинĕсрен аякра мар вырнаçнă "Фишт" стадионра, пуçланчĕ. Вăл виçĕ сехете яхăн пычĕ. Уявăн тĕп саманчĕ – Олимп чашăкне çутни. Ăна уçлăха хăпарнă факелтан чĕртрĕç.

Олимпиадăра пирĕн çĕр-шыв чысне 223 атлет хÿтĕлет, вĕсен 60 ытла процентĕ кунашкал ăмăртăва пирвайхи хут хутшăнать. Вĕсем çак хисепе патшалăхри чи вăйлă спортсменсен йышне кĕме пултарнипе тивĕçнĕ. Спортсменсен вăтам ÿсĕмĕ – 22,5 çул. Çĕр-шыв историйĕнче ку ушкăн чи çамрăкки шутланать.

Олимпиада ĕнер çеç уçăлчĕ пулин те хăш-пĕр тупăшу висĕм кунах пуçланчĕ. Ту çинче фристайлистсемпе сноубордистсем ăмăртрĕç. "Айсберг" керменри пăр çине фигуристсем тухрĕç. Тĕнчипе палăрнă Евгений Плющенко куракансене тÿрех тыткăна илчĕ. Юзуру Ханю яппун фигурисчĕ хыççăн иккĕмĕш вырăна тивĕçрĕ. Туринти Олимп чемпионĕ 91,39 балл пухрĕ.

Мăшăрлă ярăнакансем Татьяна Волосожар тата Максим Траньков пĕрремĕш вырăна тухрĕç. "Пире куракансем вăйлă хавхалантарчĕç, çакă та çитĕнÿ тума пулăшрĕ пуль", – терĕ Татьяна Волосожар журналистсене интервью панă май.

Олимпиадăна кайма, ăмăртусене хăйсен куçĕпе курма аслисемпе пĕрле кĕçĕннисем те ĕмĕтленсе пурăнчĕç. ЧР Вĕренÿ министерстви республикăри ача çурчĕсенче пурăнакан ултă çамрăка Олимп вăййисене çитсе курма май туса панă.

Ăмăртусене курма каякан та чылай. ЧР Культура министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх, Чăваш Ен 20 артисчĕ Сочие çул тытать. Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнчен унта кайма труппăн илемлĕх ертÿçи Анатолий Федоров тивĕçнĕ. Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнчен Ольга Мацуцына артиста суйланă. Вырăс драма театрĕн директор çумĕ Владимир Лазарев çула тухать. Чăваш патшалăх академи драма театрĕнчен Евгений Урдюков артист та Сочие кайма хатĕрленет. Вăл Словенипе Словаки командисем хоккейла выляннине курĕ.



Волонтерсен пулăшăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тĕнчери чи пысăк ăмăртусенче вĕсен ĕçĕ уйрăмах курăмлă. Сочири Олимп тата Паралимп вăййисем те волонтерсемсĕр иртмеççĕ. Пирĕн республикăран унта 176 çамрăк хутшăнать. Волонтерсен йышĕнче И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсем те пур. Ют чĕлхе тата управлени факультечĕсенче вĕренекен 6 пикене яваплă ĕç шанса панă.

Шупашкарти экономика-технологи колледжĕн 94 вĕренекенĕ Сочие çитнĕ те. Пирĕн ентешсем апатлану предприятийĕсенче поварта, сутуçăра, официантра ĕçлеççĕ.

Сочири Олимп паркĕнче РФ регионĕсен экспозицийĕсен куравĕ уçăлнă. Унта Чăваш Ен те хутшăнĕ. Чăваш патшалăх филармонийĕн "Çавал" фольклор ансамблĕ хăйĕн юрри-ташшипе савăнтарĕ. Экспозицие паллаштаракансен йышĕнче пирĕн республика çыннисем те пур. Олимпиадăна пынисен чăваш халăх апатне ас тивсе курма та май пулĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

ÇĔНĔ ТЕХНОЛОГИСЕН ĔМĔРĔ

# Юн тымарĕсен ĕçне йĕркелеме, япала ĕмĕрне тăсма...

Вертолетсемпе, триатлонпа, йывăр атлетикăпа кăсăкланакан, помидор çитĕнтерме юратакан Пекка Вильякайнен Раççее Финляндирен килнĕ. Халĕ «Сколково» фонд президенчĕн канашçинче ĕçлет. 250 çынлă ялта пурăннăскер, 13 çултах хăйĕн ĕçне йĕркеленĕ. Çулсерен тупăш ÿтларах та ытларах кĕнĕ алла. Телекоммуникацисен лидерĕ тĕнчери 26 çĕр-шывра филиалсем уçнă. 38 çулта хăйĕн ирĕкĕпе тивĕçлĕ канăва тухнă предприниматель. Çав вăхăталла унăн компанийĕнче 20 пине яхăн çын вăй хунă. «Мана та анне хам тĕллĕн ĕçлеме чарнăччĕ. Эпĕ банкрота çаврăнасран хăранă вăл. Çук, нимрен те шикленмелле мар. Çакна, чи малтанах, ачана çывăх çыннисен ĕнентермелле», – палăртать Пекка Вильякайнен. Вăл инноваци проекчĕсем хатĕрлекенсемпе те çыхăну тытать, çĕнĕ технологисене хута яма пулăшать.

Çак эрнере Шупашкарта Russian StartUp Tour роуд-шоу иртрĕ. Унта Раççейри аталану институчĕсен экспертчĕсем, инвесторсем инноваци проекчĕсен авторĕсемпе тĕл пулчĕç, вĕсен пуçламăш ĕçне хак пачĕç. Çакăнтах «Сколково», «Роснано», «Starbase» фонд экспертчĕсем ăсталăх класĕсем йĕркелерĕç. Презентаци ирттерме, бизнес-плана хак пама, малтанхи утăмсен йăнăшĕсенчен хăтălма вĕрентрĕç. Ку мероприяти 27 хулана, 8 пин çынна, аталану 4 институтне çыхăнтарать. Пултарулă çынсемпе паллашас тĕллевлисене çул çÿрев Санкт-Петербургран пуçласа Владивостока çитерет. Çавна май 250 питч-презентаци ирттерме палăртнă. Çĕртме уйăхĕнче роуд-шоуна хутшăнакансем стартап-конференципе пуçтарăнĕç. Унта пĕлтерĕшлĕ çак ĕçе пĕтĕмлетĕç, проектсене пурнăçа кĕртмешкĕн укçа уйăрĕç.

Чăваш инноваторĕсем 80 проект сĕннĕ. Вĕсенчен 14-не кăна суйласа илнĕ экспертсем. Андрей Драгунов хирург наноплазм хăйне евĕрлĕхĕпе паллаштармашкăн черетлĕ операцирен чупса çитрĕ. Андрей Терентьев çил тата гидроэнергетика çĕнĕ йышши хатĕрĕ пирки каласа кăтартрĕ. Циануретанпа витни япала ĕмĕрне тăсма май пани çинче чарăнса тăчĕ Михаил Кузьмин. Шăпах çак проект авторĕсем хальлĕхе çĕнтерÿçĕсен йышне кĕнĕ. Вĕсен стартап-конференцие хутшăнма ирĕк пур. Кам пĕлет, тен, шăпах çав çынсен хăйсен ĕçне йĕркелеме май килĕ? Чăваш Республикинче пурăнакансем сĕнекен çĕнĕлĕхе пĕтĕм тĕнче йышăнас шанăç пур.

Çавнашкалах ăшă çурт проекчĕ, электромобиль двигателĕ, медицинăри çĕнĕ йышши эндопротез, пысăк напряжение чăтăмлă пралук, магнит подшибникĕсем... тавра сăмах пуçарчĕç. Проектпа паллаштаракансем çав япала уссине ĕнентерме тăрăшрĕç. Хăшне-пĕрне урăх хулари инноваторсемпе çыхăнма, вĕсен тĕпчевĕсене ăша хывса малалла пĕрле ĕçлеме сĕнчĕç.

Хăнасем Шупашкартан Хусана тухса кайрĕç. Унта вĕсене çĕнĕ проектсен авторĕсем кĕтеççĕ.

Проектсемпе тата вĕсен авторĕсемпе «Чăваш хĕрарăмĕн» черетлĕ номерĕсенче тĕплĕнрех паллаштарăпăр.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



НУМАЙ АЧАЛЛĂ АШШĔ

# Çывăх çынсен телейĕ – чи пĕлтерĕшли

**«Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат пуçарăвĕпе республикăри Хĕрарăмсен канашĕ, Ашшĕсен канашĕ пĕрле иртterекен «Нумай ачаллă ашшĕ» конкурса хутшăнма тивĕç арçын шыраса Хĕрлĕ Чутай районне шăнкăравларăмăр. «Атнарта пурăнакан Геннадий Сидоровăн – 4 ача, мăшăрĕ тăватă çул каялла çĕре кĕнĕ чухне чи кĕçĕнни 3-реччĕ, 2 хĕрĕ шкулта вĕренетчĕç, чи асли – çар хĕсметĕнчеччĕ», – пĕлтерчĕç районти социаллă хӳтлĕх пайĕнчен. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Кузнецов та нумай ачаллă ашшĕне ырă сăмахпа кăна асăнчĕ: «Килти хуçалăха çирĕп тытать, эрехпе айкашмасть, общество ĕçĕнчен пăрăнмасть, ачисем тĕрĕс-тĕкел ӳсеççĕ», – терĕ.**



### Фермăра

Геннадий Владимировича килĕнче тытаймарăмăр, кӳршисем вăл фермăна кайнине систерчĕç: арçын аппăшне пулăшма çӳрет-мĕн. Чăнах та, лара-тăма пĕлменскер унта çитнĕ те иккен. Ĕçлĕ çынна чăрмантарас мар тесе киле таврăнмарăмăр, ферма заведующийĕн пӳлĕмĕнче калаçу пуçтартăмăр.

Çак фермăпа пурнăçĕнчи чылай самант çыхăннă арçыннăн: арăмĕ Галина дояркăра чылай çул ĕçленĕ. «Çын çитместчĕ те кăкăр ачине аннепе хăварса ĕçе тухатчĕ. Ун чухне пĕр çын пуçне сумалли ĕне 29-а та çитетчĕ. Арăма пулăшас тесех механизатортан тухса фермăна слесаре кĕтĕм. Галина хастар дояркăсенчен пĕриччĕ...» – аса илчĕ Геннадий Сидоров.

Галинăпа Геннадий пĕрпĕрне шыраса тупиччен иккĕшĕ те Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçленĕ: Канаш районĕнчи Çĕлпуç пики – повар-та, йĕкĕт – электромонтерта. Çемçе те ăшă кăмăллă хĕре вăл пĕрре курсах килĕштернĕ. Анчах хулара тĕпленеймен çамрăк мăшăр. Хуçалăх тытса пымашкăн амăшне пĕччен йывăр тесе Атнара куçса килнĕ. Хĕр ĕмĕрĕ – хăналăх теççĕ те, качча кайнă хыççăн пачах урăх пурнăç кĕтнĕ хĕрарăма. Çапла вара Шупашкар урамĕсем тăрăх çӳллĕ кĕлеллĕ пушмака шаклаттарса ĕçе çӳрес вырăнне атă тăхăнса ферма çул тытнă Галина. Умлăн-хыçлăн виçĕ ача çут тĕнчене килнĕ вĕсен. Мăшăр çĕнĕ çурт çĕклеме тытăннă. Йăлтах хăй еккипе пынă темелле. Пĕрне-пĕри ăнланса, килĕштерсе пурăннă упăшкипе арăмĕ. «Хĕрарăм çине алă çĕклесе курман, сивĕ сăмахпа кӳрентермен, килте те, ĕçре те пулăшма тăрăшаттăм. Çапах упраса çитерейменрĕм пулас...» – ассăн сывларĕ Геннадий. 2009 çулхи пуш уйăхĕнчи синкерлĕ çав кун Сидоровсен асĕнчен нихăçан та тухмĕ.

– Кăнтăрла юлташпа пирĕн патра апатлантăмăр та фермăна тухса кайрăмăр. Галя çăкăр пĕçерсе юлчĕ. Килте анне, виççĕри Даниил пурччĕ. Каçхи сăвăм та пуçланчĕ ĕнтĕ – манăн арăм çаплах фермăра çук та çук. Пăшăрханма тытăнтăм, килелле чупрăм. Галя аптраса ӳкнĕ. Юн пусăмĕ пĕчĕккипе нушаланатчĕ çав. Фельдшера, «Васкавлă пулăшăва» чĕнтĕмĕр. Юн пусăмĕ пĕрех улшăнмарĕ. Район больницине илсе çитерейменрĕмĕр, çул çинчех чунĕ тухрĕ», – йывăр аса илĕве путрĕ арçын.

### Тăваттăмĕшĕ – ытлашши мар

Çемье çĕнĕ пӳрт çĕклеме тытăннă чухне Галинăн çие юлнă. Анчах кун пирки тӳрех пĕлмен-ха хĕрарăм. 40-е çывхараканскерĕн тепĕр ача çуратасси пуçра та пулман. «Асли 18 тултарать авă, кĕçех асанне пулма вăхăт çитет», – тенĕши? Районти тухтăрсем хĕрарăма Шупашкарти перинаталь центрне янă. «Арăм пуç çаврăннипе аптăратчĕ те, инçе çула пĕччен яма шиклентĕм, унпа пĕрле хам та пытăм. Вăл аборта каяс шухăшлăччĕ. УЗИ пăхаканни мана, коридорта лараканскере, чĕнсе кĕртрĕ те монитор çинчи ӳкерчĕке кăтартрĕ. Хамăн пепкене курсан чунран савăнтăм, усал шухăшсене пуçран кăларса пăрахрăм. «Виççĕшне çитĕнтернине тăваттăмĕшне те ӳстерĕпĕрех», – тесе килелле тапрантăмăр. Юрать-ха, çавăн чухне ачана вĕлерсе çылăха кĕмерĕмĕр. Куншăн паян кун та хĕпĕртетĕп», – савăнăçне пайлать нумай ача ашшĕ. Çапла çут тĕнчене килнĕ Даниил. Вăл çуралнăшăн аппăшĕсем епле хĕпĕртенĕ тата! Пĕчĕкскерне пукане вырăнне йăтса çӳренĕ. Салтакран таврăннă пиччĕшĕ те шăллĕне алăран яман.

### Ачасем

Пĕрремĕш ывăлĕ Владимир çартан таврăнсанах шапашкăна тухса кайнă. Çемьене укçатенкĕрен чылай пулăшнă, ашшĕне çăмăл машина та туянса панă çаврăнăçуллăскер. Мускав облаçĕнче вырăс хĕрĕпе Олеçьăпа паллашса çемье çавăрнă йĕкĕт. Мăшăр халĕ унтах пурăнать, ашшĕне мăнукпа савăнтарма та ĕлкĕрнĕ çамрăксем.

Иккĕмĕш хĕрĕ Марина ача чухнех куç начар курнипе аптăранă. Вăл Шупашкарти ятарлă интернат шкулта 12 çул пурăннă, вĕреннĕ. Ял хуçалăх академине вĕренме кĕнĕ, пĕлтĕр ветеринар дипломне алла илнĕ.

Амăшĕ вилнĕ хыççăн йывăрлăх ытларах виççĕмĕш хĕрĕ Оля çине тиеннĕ. Шкултан килсен виççĕри шăллĕне пăхнă, кил-çурта тирпейленĕ, урок тунă... Оля та халĕ Шупашкарта пурăнать, парикмахерта ĕçлет.

Хĕрĕсем яла вĕçĕмех çӳреймеççĕ, çапах: «Атте, мĕнле пурăнатăн?» – тесе шăнкăравламасăр пĕр кун та иртмест.

– 80-ран иртнĕ анне те япăхсах пычĕ, ăс-тăнĕ улшăнатчĕ унăн. Асăрхамасан çур çĕр варринче килтен тухса каятчĕ. Вăл та икĕ çул каялла çĕре кĕчĕ. Хуйхă-суйха пула çĕнĕ пӳрте часах куçаймарăмăр. Аслă ывăл укça ĕçлесе илме тытăнни пысăк тупăш кӳчĕ. Арăм енчи тăвансем те хутшăнăва татмаççĕ, çурта туса пĕтерме те чылай пулăшрĕç. Хĕрĕмсем те хулара вĕсен хваттерĕнче пурăнчĕç, – çемье пурнăçĕпе малалла паллаштарчĕ ашшĕ.

### Чун валли – тус

Кĕçĕнни, 8-ти Даниил, пирки калама тытăнсан арçыннăн кăмăлĕ уçăлчĕ, куçĕ савăнăçпа çиçрĕ. Ашшĕн пĕтĕм пурнăçĕ ун тавра çаврăнать тейĕн: ирпе шкула ăсатать, кĕтсе илет вăл ăна. Çывăрма та пĕрлех выртаççĕ ашшĕпе ывăлĕ. «Мĕн пĕçерсе çиййĕпĕрха?» – шăкăл-шăкăл калаçса кун иртнине те сисмеççĕ. Çапах иккĕмĕш класа каякан Даниил пĕр тăванĕсемшĕн тунсăхлать. «Хăçан килетĕр?» – кĕсье телефонĕ шăнкăртаттсанах чи малтан çак ыйтăва парать вăл.

Геннадий Владимирович пытармарĕ: чуна валли юлташ тупнă вăл. Хутран-ситрен хĕрарăм Атнара хăнана килет. Çакăншăн чи малтан Даниил хĕпĕртет-мĕн: иккĕшĕ пĕр чĕлхе тупнă вĕсем. Аслă хĕрĕпе Маринăпа та кун пирки сăмах вакласа илтĕмĕр. «Пирĕншĕн чи пĕлтерĕшли – çывăх çынсен телейĕ. Кукамай та аттене тепре авланма сĕнĕччĕ. Хĕрарăмсăр килтĕрĕшре çăмăл мар арçынна. Хăй кăмăлланипе пурăнма тытăнсан эпир хирĕç пулмăпăр», – çывăх çыннисен пăшăрханнине пытармарĕ пике.

**Алина ИЗМАН.**

ЫЙТĂМ

# Ватлăха мăшăрпах кĕтсе илесчĕ

**Арçын пурнăçĕ арăмран килет теççĕ. Арпа арăм лăпкă пурăннине, чăн та, нимĕн те çитмест. Анчах арăмĕпе упăшкине тĕрлĕ сăлтав хирĕçтерме пултарать. Килте вăрçă пуçлансан вара мĕн тумалла? Чим, çемье пуçĕ хăйĕн айăпне мĕнле майпа каçарттарать-ши? Çакăн тавра Чăваш Енре тĕпленнĕ тĕрлĕ халăх ывăлĕсене калаçтартăмăр.**



**САМВЭЛ, эрмен:**

– Арăмăн кăмăлне çавăрасси ним те мар маншăн. 10-15 пин тенкĕлĕх ылтăн эреш илсе параймастăп-и эпĕ ăна? Сăлтавсăрах чечек тыттарасси те йăлана кĕнĕ. Манăн шухăшпа, пĕрре те пулин çылăха кĕнине мăшăра систермесен те юрать. Мĕншĕн пăшăрхантарас ăна? Çакна, паллах, вăрттăнлăхра тытма тăрăшăп.

**СЕРГЕЙ, вырăс:**

– Манăн арăм ахаль-махальшăн тута тăсса çӳрекенсен йышĕнчен мар. Халь тин урăххи патĕнче киленĕç шырас çук ĕнтĕ. Айăпа кĕмесĕрех мăшăра тĕрлĕ парнепе савăнтарас килет. Ку енĕпе мана ăнăçнă тесен те юрать. Вăл хаклă кĕрĕкшĕн, ылтăн эрешшĕн каçса каймасть. Килте усă курмалли техникăпах унăн кăмăлне тупма пулать.

**МУХАМЕД, Суданран вĕренме килнĕ студент:**

– Эпĕ пĕр çул ĕнтĕ чăваш хĕрĕпе туслă. Вăл ырă кăмăллă, сăпайлă. Эпир вăрçăнса курман, сăлтавĕ те пулман. Хĕрсем парне юратаççĕ. Савнине уявсенче ылтăнпа савăнтаратăп. Урăхла парне пулма та пултараймасть.

**НИКОЛАЙ, Патăрьел районĕ:**

– Темĕн те пулать пурнăçра. Эпир, арçынсем, çылăха кĕретпĕр çав. Паллах, айăплă. Мăшăр ăна сиссе те юлмасть. Хам нихăçан та каласа парас çук. Çавăнпа та халĕччен каçарттармалли пулман. Эпĕ ĕçлеме юрататăп, киле çителĕклĕ укçа-тенкĕ илсе таврăнатăп, эрех-сăрапа иртĕхместĕп, туртмастăп. Юттипе тытсан та арăм каçарассăн туйăнать. Паллах, малтан вăрçать, кăшкăрать ĕнтĕ. Анчах та пăрахса тухса каяймасть, мана та кăларса яраймасть. Эпир пĕр çемье вĕт. Тута тăсса çӳрени те майĕпен иртет, манăçать. Енчен те айăп каçарттармалла пулсан, тем те пĕр илме пĕлместĕп, укçа парăп та хăй туянĕ.

**МАГОМЕД, грузин:**

– Хĕрарăм ылтăн эреш юратать. Чăн та, ăна айăпа каçарттарассишĕн парнелеместĕп. Сăлтавĕ унсăрăнах тупăнать. Мăшăрпа эпир – пĕр халăх çыннисем. Шупашкарта чылай çул пурăнатпăр. Пирĕн наци хĕрарăмĕсем упăшкана мĕнле юрамаллине пĕчĕкренех ăса хывса ӳсеççĕ, вак-тĕвекрен шăв-шав çĕклемеççĕ. Çавăнпа та пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланма хăнăхнă.

**Александр СОКОЛОВ, çармăс:**

– Кĕл чечек çыххи, шампань эрехĕ хĕрарăм кăмăлне хăпартаççĕ-ха, анчах парнепе киле пырса кĕрсен арăм мĕнле йышăнĕ-ши? «Çылăха кĕнĕ те çапла майпа айăпне каçарттарасшăн ку», – тесе шухăшлĕ, ятлаçма тытăнĕ. Сирĕнпе, хĕрарăмсемпе, аптăрамалла, нимĕнле те юрама çук... Юрĕ, ку – шӳт тейĕпĕр. Паян арăмпа иксĕмĕр пасарта пахча çимĕç курттăмăн сутрăмăр. 32 çул калла çемье çавăрнă эпир. Куншăн пĕртте ӳкĕнмен.

**Виталий Макарович, Етĕрне районĕ:**

– Мăшăр умĕнче халĕччен те айăпа кĕмен эпĕ: юталла чупман, сасă хăпартса калаçман... Çулсем иртнĕ май пĕрпĕрне ытларах та ытларах хисеплетпĕр. Ватлăха çумри мăшăрпа кĕтсе илнине нимĕн те çитмест.

ЖУРНАЛИСТ КУÇĔПЕ

# «Хастар» ят панипех хастар пулаймăн

**Тунти кун Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче командировкăра пулнă май «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕн ĕç-хĕлĕпе паллашма тӳр килчĕ. Район администрацийĕн культура, спорт тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ Александр Самсонов журналистпа пĕрле хапăлласах çула тухрĕ.**



– Пĕтĕм Раççейпе пĕрле ĕнер эпир те «Йĕлтĕр йĕрĕ-2014» чупăва тухрăмăр. Ăна стадионта мар, вăрманта ирттертĕмĕр. Пурĕ 456 çын йĕлтĕр сырчĕ, – çапла калаçса пынă май ФСКна çитни сисĕнмерĕ те. Кафель карталашкапа хăпарнă чухне шуçса ӳкесрен хăрарăм. «Кунта мĕншĕн кавир сармастăр?» – ыйтатăп пуçлăхран. «Пурччĕ-ха, çĕтĕлсе пĕтнĕ-ши? Эсир хăвăр шуçлак тĕплĕ атă тăхăнман-и паян?» – шахвăртать вăл мана.

Кăнтăрлахи икĕ сехет иртнĕччĕ. Шкул ачисем уроксем хыççăн комплекса чупа-чупа кĕчĕç. Хывăнмалли пӳлĕме хăйсем тĕллĕнех кĕрсе çи-пуç улăштарчĕç. «Пирĕнпе пĕрле футболла выляма килĕр!» – чĕнчĕ спортзалта тренировка ирттерекен Людмила Михуткина. Шел, ку ĕсталăх манăçнă ĕнтĕ... Иккĕмĕш хута хăпартăмăр. Теннис сĕтелĕ асăрхарăм, анчах вылякан çукчĕ. Бассейн еннелле утрăмăр. Кунта та тирпейлĕ́çĕпе тренер çеç. «Ишекенсем ăçта сирĕн?» – кăсăклантăм эпĕ. «Эсир мĕн шухăшлă çынсем, шыва кĕрессĕн-и?» – ăнланмарĕ манăн ыйтăва тренер. «Хаçат корреспонденчĕ эпĕ, районсенчи ФСКсен ĕç-хĕлĕпе кăсăкланатăп», – паллашрăмăр Юрий Столяровпа. «Халĕ кăна 10-мĕш классен занятийĕ вĕçленчĕ. Хĕрлĕ Чутай шкулĕнчи кашни класс /кĕçĕннисемсĕр пуçне/ физкультурăн виççĕмĕш урокне çакăнта ирттет», – терĕ Юрий Иванович. Кăваккăн курăнакан шывран куç илейместĕп, сывлăшĕ те лĕпех кунта: бассейна чăмас килет. Çынсем мĕншĕн çак ырлăхпа усă курмаççĕ-ши? «Пирĕн пата, Кӳкеçри «Улăп» ФСК бассейнне, ир пуçласа каçчен татти-сыпписĕр çын килет, ирĕклĕн ишме те вырăн çук. Кунта хăть пĕччен саркалан!» – калаçрăмăр тренерпа.

«Танлаштартăр та! Кӳкеçе Шупашкартан халăх çӳрет. Аякри ытти район центрĕнче те лару-тăру пирĕннешкелех. Çынсем ĕç кунĕ хыççăн каçхине килеççĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнисен пĕр ушканĕ кăнтăрла çӳретчĕ, паян çеç çук вĕсем», – палăртрĕ Юрий Иванович.

Комплексăн тăватă хутне те хăпартăмăр. Тренажер, ирĕклĕ майпа кĕрешекенсен залĕсене кĕреймерĕмĕр. «Занятисем расписанипе килĕшӳллĕн иртеççĕ», – алăксем питĕрĕнчĕк тăнине çапла сăлтавларĕç.

Аэробика залĕнче Татьяна Сергеева тренер-преподаватель хĕр ачасемпе заняти ирттеретчĕ. Хăтлă çĕрте вĕсемпе пĕрле хамăн та хускану тăвас килчĕ. Тĕрлĕ инвентарь те алă айĕнчех. Ачасене ăмсантăм, эпир ӳснĕ чухне çакнашкал май пулман-çке. «Аслисем ыйтнипе тӳлевлĕ фитнес-аэробика тата пĕчĕккисем валли ритмика ушкăнĕ йĕркелесшĕн», – усăмлатать инструктор.

«Хастар» ФСК пуçлăхĕн вĕрентӳпе спорт енĕпе ĕçлекен çумĕпе, кире пуканĕ йăтассипе спорт мастерĕпе Юрий Бронюковпа калаçма тӳр килчĕ. «Спортăн 9 тĕсĕпе: волейбол, ирĕклĕ майпа кĕрешесси, кире пуканĕ, çăмăл атлетика, йĕлтĕрпе чупасси, ишесси, футбол, шахмат, аэробика – уйрăмсем ĕçлеççĕ. 376 ача тӳлевсĕрех çӳрет унта. Пĕлтĕр халăха 750 пине тенке яхăн тӳлевлĕ пулăшу кӳнĕ», – паллаштарчĕ Юрий Анатольевич.

ФСК çурчĕнче ача-пăча искусство шкулĕ валли те вырăн уйăрнă. Кунта, сăмахран, баян, фортепьяно, соло, ал ĕçĕн класĕсем ĕçлеççĕ. Спорт комплексĕн пӳлĕмĕсене урăхларах тĕллевпе усă курни тĕлĕнтерчĕ паллах. Ыйтăва Александр Самсонов çийĕнчех усăмлатрĕ: «Çакăн пек тĕслĕх республикăра татах пур. Сăмахран, Муркашри «Сывлăхра» та искусство шкулĕн класĕсем ĕçлеççĕ. «Хастара» хута яриччен пултарулăхăн тĕрлĕ енĕпе кăсăкланакансем районти культурăпа кану центрне çӳрерĕç. Анчах санитари нормисене тивĕçтерменнине кура искусство шкулĕн урокĕсене унта ирттерме ирĕк памарĕç. Кунта пурин валли те вырăн çитет, классенчи сĕтел-пукан та ФСКна федераци программипе килĕшӳллĕн комплектпа пĕрле килчĕ».

Чӳречерен стадион ал лаппи çинчи пекех курăнать. Йĕлтĕр йĕрĕ ярăнма чĕнет, анчах стадион та пуш-пушах. Йĕлтĕр прокачĕ йĕркеллех ĕçлетчĕ. «Ĕнерхи ăмăртура ывăннă-ши?» – Хĕрлĕ Чутайсене тӳрре кăларма тăрăшрăм эпĕ. Анчах райцентрта каток çуккине пĕлсен чун хурланчĕ. Хоккей курупки пур-ха, анчах ăна пăрпа витмен. «Пĕчĕкрех стадионта каток усма палăртнăччĕ. Тен, çывăх вăхăтра çак ĕçе пурнăçа кĕртĕпĕр», – ăнлантарчĕ Юрий Бронюков. Пĕлтĕр хоккей курупки пурăнмалли нумай хутлă çуртсен картишĕнче пулнă-мĕн. Анчах катока пăрпа витмешкĕн чăрмав сиксе тухнă – хваттерсенче пурăнакансем шыв илме ирĕк паман. Çавăнпа çулла хоккей лаптăкне шкул картишне куçарнă. Александр Самсонов хоккей команди йĕркелесси пирки, анчах спорт инвентарĕпе тумтирне туянасси тăкакпа çыхăнни çинчен калаçу пуçарчĕ. Çапах та малтан каток тăвасси пирки шухăшламалла мар-ши? «Çапла, ку пирĕн çитменлĕх, йышăнатпăр», – килĕшрĕç арçынсем.



«Хастар» ФСК 2012 çулта çурла уйăхĕнче усăлчĕ. Вăл республикăри районсенче хута кайнă 24-мĕш, чи юлашки, спорт комплексĕ. Ăна валли 147,5 миллион тенкĕ тăкакланă. Спорт керменне савăнăçлă лару-тăрура усnă чухне республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ГАЗель усси те тыттарнăччĕ, кунта пурăнакансене физкультурăпа, спортпа туслашма чĕннĕччĕ. Анчах хальлĕхе кунта пурнăç вĕресе тăнине эпĕ асăрхамарăм.

Материала пичете хатĕрленĕ вăхăтра Хĕрлĕ Чутайĕнчен шăнкăрав çитрĕ. «Хастар» ФСК пуçлăхĕн вĕрентӳпе спорт енĕпе ĕçлекен çумĕ Юрий Бронюков стадионта каток хатĕрлеме тытăннине пĕлтерчĕ, конькипе ярăнмашкăн пире те чĕнчĕ. Мĕнех, ярăнмалли хатĕрсен прокатне йĕркелесен – çитĕпĕр те...

**Алина ИЗМАН.**

КУЛЬТУРА ÇУЛТАЛĂКĔ

# Пĕр сумран – çĕр сум

**Вăрнар тăрăхĕнчи Пăртасри 500 ытла килте 1460 çын пурăнать. Виçĕ ял пĕрлешнĕ тăрăхра врачăн пĕтĕмĕшле практика офисĕ, шкул, клуб пĕр çуртра вырнаçнă. Яла пĕр килнĕ май культура учрежденине те çитсе курас килчĕ. Хĕллехи кун мĕн ĕçлени, халăх пушă вăхăта еплерех ирттерни кăсăклантарчĕ.**

Культура çурчĕн пуçлăхĕпе Е.Макаровăпа пысăк çурт хысĕнчи чăнкă та хĕсĕк пусмапа çӳлелле хăпаратпăр. Шкулăн акт залĕ ку, тепĕр майлă – Пăртасри культура учрежденийĕ. Паллах, кунта пысăк пулнăран кунта çитиччен куç умне урăхларах çурт тухса тăнăччĕ. Зала пысăк теме те çук, пĕтĕмпе 100 çын вырнаçмалăх çеç /ялта мĕн чухлĕн пурăннине çӳлерех асăнса хăварнăччĕ-ха/. Сцена хыçĕнчи пĕчĕк пӳлĕмре те тăвăр, аппаратура, тумтир упрамалăх та вырăн çук.

– Канăва йĕркеллĕ ирттерме пире уйрăм çурт кирлĕ. Пусмапа хăпарма йывăр та мелсĕррине пула аслăрах çултисем пирĕн пата çӳресшĕн мар. Асаннекукамай хушшинче юрлас текен йышлăн. Ӳксе аманасран хăранипе клуба килмеççĕ. Районти уявсене те хаваспах хутшăнаççĕ вĕсем. Пĕрремĕш хутра пулсан та аптрамастăмăрччĕ пуль, – чун ыратăвне пайлаççĕ культура çурчĕн ĕçченĕсем. Çапах та Ленинград блокадинче пулнă ветерана тин çеç саламласа килнĕскерсен куçĕсем çиçеççĕ. Мал ĕмĕтлине, ĕçлес килсе тăнине çын сăн-питĕнчех курма пулать çав. Ташă каçĕсем ирттерсе 9 пин тенкĕлĕх акустика тытăмĕ туянни тĕлĕнтерчĕ те, савăнтарчĕ те. Пĕр сумран çĕр сум пулать тесе ахальтен каламан иккен ваттисем.

Халăх умне тухма кашниех чăваш пĕрешкел тумне çĕлеттернĕ. Сцена хальхи йышши костюмĕ те илĕртет клуб ĕçченĕсене, нухрат çукки пĕтерет. Пурăна-киле хăйсен шутĕнченех туянас шухăшлă.

«Пĕтĕм тĕнче – театр» драма кружокĕ ăнăçлă ĕçлет кунта. Спектакльсене чăвашла та, вырăсла та хатĕрлеççĕ. Кашни ĕçех куракансен асĕнче хăварма тăрăшаççĕ. Актер ăсталăхĕн хăйне евĕрлĕхне ачасем те ăша хываççĕ. Бильярд, теннис, шашкăпа шахмат выляма тата «Ăста аласем», «Çамрăк ӳнерçĕ» кружоксене шкул ачисем хаваспах çӳреççĕ. Клубра тăрăшакансем районти пĕр ăмăртуран та айккине юлмаççĕ. Икĕ çул каялла «Чи лайăх та хăтлă культура учрежденийĕ» конкурса хутшăнса 670 пин тенкĕ премие тивĕçнĕ. Унпа усă курса çурт тăррине тĕпрен юсанă. Халь кĕрлĕ-çурлă çанталăкра е çумăр çумасерен шыв каясси хăратмасть.

Пăртас ял тăрăхне кĕрекен Волонтерти культура çурчĕ юмахрине аса илтерчĕ: пысăк мар, тăпăл-тăпăл та хитре. Пĕчĕк хуранăн пăтти тутлă тесе ахальтен каламан-тăр. 20 ытла киллĕ ялта пĕтĕмпе 60 ытла çын пурăнать. Çапах та клубран халăх татăлма пĕлмест. Асанне-кукамай улах та ларать кунта. Уявсенче ура хуçса ташлаççĕ-юрлаççĕ, кукăль-пӳремеч пĕçерсе килсе чей ĕçеççĕ. Пĕр-пĕринпе чăмăртанса, туслăн пурăнма пĕлет ку тăрăхри халăх.

**Елена АТАМАНОВА.**

ПУКАШ ПУТИШĔ

# Хăнаран таврăннă чух

Хĕлле. Каç пулттипе хуларан ял пуçнелле çывхаратăп. Çуналлă лав хăваласа çитрĕ хыçран. Нютти Люççипе упăшки иккен. Юрласах хăнаран таврăнаççĕ хайхисем.

– Лиссаппа, лар! Атя мăнаккусем патне! – чĕнчĕç çаксем.

«Хутман сивĕ çуртра мĕн тăвас?» – тесе шухăшларăм та утă сарса çемçетнĕ çуна çине хăпарса лартăм.

Яла тӳррĕн çул çырма урлă выртать. Кĕрт хĕвсе кайнă вырăнта пирĕн янавар юр ăшнех путрĕ. Ашса тухаймасăр хăртлатать, пуçне пăркалать. Вăл сывлама чăрăнасран сехре хăпрĕ. Лаша хуçин, хĕрĕнкĕскерĕн, алли чĕтрет, тăварса яма вăй-халĕ çитмест. Сӳсмене хывса вĕçертес – юр айне пулнă. Кун пек лару-тăрăва пĕрре мар лексе курнă-ха эпĕ. Ача чухне лаша кӳлсе ĕçленĕ, çĕрĕпех выртмара çӳренĕ. Çапкаланчăк йытăсенчен хӳтĕленме атă кунчине çĕçĕ чиксе тухнине аса илтĕм те вăр-вар туртса кăлартăм, сӳсменĕн чĕн чӳлĕкне яш çеç татрăм. Тăварăннă урхамах кĕрт ăшĕнчен çăмăллăнах ашса тухрĕ, ирĕклĕн сывласа ячĕ. Чĕлпĕрне Нютти кĕрӳшне тыттартăмăр та çунана Люççипе иккĕн туртса кăлартăмăр, лашана çĕнĕрен кӳлтĕмĕр. Инкекрен хăтăлнă ятпа ялта ĕçкĕ ирчченех тăсăлчĕ, купăс сасси янăрарĕ...

**ПУКАШ Тули.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Семга салачĕ

**Тăварланă 400 грамм семга, 200 грамм сыр, пĕçернĕ 3 çĕр улми, 3 çăмарта, 3 пан улми, пуçлă 3 сухан, 300 грамм майонез кирлĕ.**

Çĕр улмине, сыра, пан улмине, çăмарта саррипе шуррине уйрăммăн теркăламалла. Çурма çаврашкан туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Семгăна тăваткалласа касмалла. Салата сийлесе /семгăпа сухан – çĕр улми – пан улми – сыр – çăмарта шурри – çăмарта сарри – кăштах сыр/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Пулăпа, хăярпа

**Пĕçернĕ 2 çăмарта, çĕр улми, кишĕр, пуçлă 1 сухан, маринадланă 3 хăяр, консервланă 200 грамм хăяр, майонез кирлĕ.**

Çăмартана, çĕр улмине, кишĕре хуппинчен тасатса тăваткалласа турамалла. Суханпа хăяра вĕттĕн касмалла. Пулла вилкăпа вĕтетмелле. Салата сийлесе /пулă – сухан – çĕр улми – хăяр – кишĕр – çăмарта/ хумалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Кишĕрпе, кăлпассипе

**3 кишĕр, тĕтĕмленĕ 300 грамм кăлпасси, консервланă 1 банка куккурус, симĕс сухан, майонез кирлĕ.**

Кишĕре теркăламалла, кăлпассие пĕрчĕлесе касмалла. Сухана вĕттĕн турамалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла.

### Какайпа çĕр улми хăпартăвĕ

**500 грамм какай фаршĕ, 700 грамм çĕр улми, 200 миллилитр шĕвĕ хăйма, 250 миллилитр шыв, 200 грамм сыр, 2 апат кашăкĕ тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çĕр улмине çаврашкан турамалла. Фарша 5-7 минут ăшаламалла, унтан шывпа, тăварпа, пăрăçпа пăтратнă шĕвĕ хăйма хушмалла. Вĕреме кĕрсен çĕр улми ямалла та 7 минут пĕçермелле. Çак хутăша çулăма чăтăмлă савăта куçармалла, çиелтен теркăланă сыр сапмалла. Какайпа çĕр улми хăпартăвне фольгапа витсе духовкăна 40 минутлăха лартмалла.

### Маринадланă чăх какайĕ

**1 килограмм чăх какайĕ, 2 апат кашăкĕ соя соусĕ, 100 грамм томат нимĕрĕ, 100 грамм майонез, 4 шăл ыхра, тăвар, пăрăç, тип çу кирлĕ.**

Чăх какайне тураса савăта тултармалла. Ăна соя соусĕпе, томат нимĕрĕпе, майонезпа, вĕтетнĕ ыхрапа, тăварпа, пăрăçпа пăтратмалла. Çак хутăша 20 минутлăха сивĕтмĕше лартмалла. Маринадланă какая духовкăра 40 минут пĕçермелле.

### Зефир торчĕ

**400 грамм зефир, 2 çăмарта, 400 грамм печени, 0,5 стакан сахăр, 1 стакан сĕт, 200 грамм услам çу, 1 лимон хуппи, 2 апат кашăкĕ какао кирлĕ.**

Зефир пайĕсене çурмалла пайласа кекс формине хумалла. Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла. Вĕтетнĕ печение çăмартапа сахăр хутăшĕпе пăтратмалла. Ăна сĕтпе хутăштарса çăраличчен вĕретмелле, сивĕниччен кĕтмелле. Çăва теркăланă лимон хуппипе хутăштармалла, печенипе çăмарта хутăшĕ ямалла. Çак крема кекс формине тултармалла.

### Тăпăрч хăпартăвĕ

**500 грамм тăпăрч, 1 банка çăратнă сĕт, 3 çăмарта, чĕптĕм ванилин кирлĕ.**

Тăпăрча çăмартапа пăтратмалла, çăратнă сĕтпе ванилин хушмалла. Çак хутăша çатмана ямалла. Духовкăра 45 минут пĕçермелле.

### Çĕр улми икерчи

**6 çĕр улми, 2 çăмарта, 0,5 стакан çăнăх, 0,5 стакан сĕт, тăвар, сахăр, тип çу кирлĕ.**

Çĕр улмине теркăламалла, сĕткенне пăрса кăлармалла, сĕтпе, сахăрпа, тăварпа, çăмартапа, çăнăхпа пăтратмалла. Çĕр улми икерчине тип çупа ăшаламалла.

### Чие пудингĕ

**50 грамм услам çу, 4 çăмарта, 100 грамм сахăр, 1 стакан авăртнă сухари, шăнтнă 1 стакан чие кирлĕ.**

Услам çăва сахăрпа, çăмарта саррипе, сухарипе, ирĕлтернĕ чиепе пăтратмалла. Унтан чустана кăпăклантарнă çăмарта шурри хушмалла. Чие пудингне духовкăра 30 минут пĕçермелле.

## УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

Купăста кукăлĕ лайăх пиçтĕр тесен малтанхи 15 минутра духовкăна уçмалла мар.

Лавр çулçине яшкаран кăларса илмелле, унсăрăн çак техĕмлĕх апат тутине пăсĕ.

Çулăма сӳнтериччен яшкана кишĕр, томат е купăста сĕткенĕ хушмалла. Вăл пăтта çу янă пекех апата тутă кĕртĕ.

Шалча пăрçи е пăрçа хăвăртрах пиçтĕр тесен кастрюле кашни 5-10 минутра сивĕ шыв ямалла.

Пĕçерме лартиччен çĕр улмине 1 сехетлĕхе те пулин тăварлă шывра тытсан С витамин çухалмĕ.

Икерчĕ пĕçерме пуçличчен çатмана тăварпа сăтăрмалла – чуста тĕпне çыпăçмĕ.

Пахча çимĕçе темиçе сехет вĕретмелле мар. Кастрюле ытлашши шыв ярсан та çимĕç тути улшăнĕ.

Вăйлă çулăм çинче вĕретнĕ çĕр улмин ăшĕ пиçеймест, тулашĕ ирĕлсе каять.

Çĕр улми вĕретнĕ шывпа яшка пĕçерме пулать.

Вĕтетнĕ сухана салата хушиччен дуршлага ямалла, вĕри шывпа çумалла – ун йӳççи çухалĕ.

Тымар çимĕçрен хĕрлĕ кăшманра нитрат чи нумай пуçтарăнма пултарать.

Теркăланă йӳç кăшмана сивĕ шывпа темиçе хут çумалла. Çакăн хыççăн ăна ачана çитерме те юрать.

## ПĔЛЕТĔР-И?

# Тутлă ыйхă вăрттăнлăхĕсем

**Матрас тахçанах, авалхи çынсем чĕр чун тирĕ сарса çывăрма тытăннă чухнех, çуралнă. Вăхăт иртнĕ май чылай улшăннă вăл паллах. Улăм, çăм, тĕк… тӳшек, пружина матрас пурнăçа кĕнĕ. Халĕ чи анлă сарăлни – мамăк, поролон е тĕк матрас. Çапах та хăшĕн çинче ыйхă тутлăрах-ха?**

Поролон – çемçе те çăмăл материал. Анчах та унăн хăйĕн çитменлĕхĕсем пур. Çав матрас çинче выртсан çурăм шăмми тӳрленеймест, канаймасть. Юн çаврăнăшĕ пăсăлнине пула 2-3 эренерен пилĕк ыратма, çурăм шăмми е сыпă сурма тытăнĕç. Поролон нӳрĕке лайăх çăтать, ăна чылай вăхăт кăлармасть. Çавăнпа та сивĕ вырăна хамăр кĕлеткепе ăшăтма тивет. Кун пек матрас çинче çывăрсан тĕртĕмсене шăнтас, ревматизм чирне аталантарас хăрушлăх пур.

Комфорель – хаклăрах та пахалăхлăрах синтетика материал. Вĕтĕ çаврашкасенчен тăракан силикон чĕлкĕме бактерипе сăвăсран хӳтĕлекен препаратпа им-çамлаççĕ. Япалана темиçе хутчен çусан та унăн витĕмĕ сыхланса юлать. Çунă хыççăн та матрас хăвăрт типет, лапчăнмасть, кĕççеленмест. Кун пек вырăн хуçине аллерги те нушалантармасть.

Тĕк тӳшекĕн начар енĕсем поролонпа пĕр пекех, хакĕ вара чылай пысăкрах. Тĕк ăшша лайăх тытать. Нӳрĕке татах та ытларах туртать, вăл хăвăрт типеймест. Çавăнпа та тӳшек питне хулăн пусмаран çĕлемелле. Кун пек чухне ӳт-тир йĕркеллĕ сывлаймасăр шар курать.

Халĕ чылайăшĕ латекс, çут çанталăк материалĕ, е ортопеди матрасĕ суйлама тăрăшать. Вăл çемçе те, çав вăхăтрах пиçĕ те. Ун çинче çывăраканăн çурăм шăмми тĕрĕс те тӳрĕ вырнаçать, нерв тата юн тымарĕсем хĕсĕнменнине кура шăм-шак та лайăх канать.

Сывлăхшăн чи усăлли – çăм матрас. Унта ăшă лайăх куçса çӳрет, ӳт сывлать. Çăмра ланолин пур. 36 градус ăшăпа вăл ирĕлет, ӳт-тире кĕрсе шăмă сыппине, çурăм шăммине, тĕртĕме лайăх витĕм кӳрет, юн çаврăнăшне йĕркелет. Çăм вырăн – пуринчен те ăшши тата типпи.

Чи ăнăçли – ортопеди матрасĕ. Пĕр енĕ – сăрламан çăмран /хĕлле валли/, тепри йĕтĕнрен /çулла валли/ хатĕрлени. Тепĕр сĕнӳ те пур: çакăн евĕр хатĕрсенчен çĕленĕ матрас пичĕ туянмалла. Вĕсене поролон матраса тăхăнтартсан ыйхă канлĕрех те усăллăрах килĕ.



## ШУТА ИЛМЕ



# Ăшă та хăтлă кĕтес

**Кил чылайăшĕшĕн сутă та ăшă утрав евĕрех. Хăнара лайăх-ха, анчах та хăв пурăнакан кĕтесе нимĕн те çитмест. Çавăнпа та кашни кил хуçи хĕрарăмĕ ăна хăтлă, хăйне килĕшмелле йĕркелеме тăрăшать. Ытлашши тăкакланмасăрах çурт ăш-чикне илем кӳме май пур.**

- Кресло çине ăшă плед сарăр. Тăваткал ӳкерчĕкли лайăхрах.
- Диван çине пысăках мар 3-4 минтер хурăр.
- Йывăçран ăсталанă ал ĕçĕ те кил-çурта хăтлăх кӳрет. Çӳлĕк е шкап çине йывăç кĕлетке е амулет вырнаçтарăр.
- Çемье пуçтарăнакан пӳлĕмре каçхине çурта çутни ăшă та çутă сĕм кĕртет.
- Ятарлă лампа туянса пӳлĕмре ырă шăршă кăларма май пур.
- Урайне алăпа çыхнă темиçе пĕчĕк кавир сарăр.
- Пӳлĕмри ырă мар шăрша пĕтерме тин çеç пĕçернĕ кофе пулăшать.
- Сĕтел çинче хитре чечек ларни те кăмăла уçать.

## КАЛА-ХА, ТĔЛĔКĔМ



**Ача çуратни /хĕрарăмшăн/** – çие юласса, çăмăлланасса,

**ача çуратнине аслă ӳсĕмри хĕрарăм курсан** – шăкпа ар тытăмĕн чирĕпе аптăрасса,

**шывра ача çуратни, хырăм ыратни /хĕршĕн/** – хĕрлĕхе çухатасса, качча каясса,

**хăйĕн ачи çуралнине арçын курсан** – пурнăçри пысăк ылмашăва, ăнăçу кӳрекен план шухăшласа кăларасса,

**ача йывăррăн çуратни, юн тухни /арçыншăн/** – ĕмĕте пурнăça кĕртес çул çинче пăтăрмах тухасса, хĕрарăмшăн – чире,

**вăхăтсăр çуратни /арçыншăн/** – палăртса хуни харама каясса, хĕрарăмшăн – çие юлнă вăхăтри хăрушлăха,

**пепкене хырăмран касса кăларни** – кам та пулин пулăшăвĕ кирлĕ пулсса,

**вилĕ ача çуратни** – ăнăçсăр, пурнăça кĕмен плана,

**йĕкĕреш е виçĕреш çуратни /хĕрарăмшăн/** – çие юлнă вăхăтри пăлханăва,

**юратнă хĕрарăм çăмăлланнине арçын курсан** – савнийĕн çие юласса, ытлă-çитлĕ пурнăça, телее,

**тăван е пĕлĕш ача çуратни** – çав çыннăн тăнăçлăхне е хумханупа пăшăрханăва,

**арçын çăмăлланни** упăшкăра сирĕн пулăшу кирлине пĕлтерет.

АХ, АНЧАХ...

# Шартлама

"Мĕнле ăнман кун пулчĕ паян? Шартлама сивĕре тухмалла та марччĕ пĕрех хут!" – хăйне хытах ятларĕ çул хĕрринче тăракан Марина. Шăнса кÿтнĕрен чĕтремех ерчĕ вăл. Йĕри-тавра шап-шурă уй-хир тăсăлать. Вичкĕн çиле алхасма чăрмантаракан пĕр йывăç та çук кунта. Çил ачисем пикене кĕлеткипех çупăрларĕç, питрен, пĕçĕрен кастарчĕç. Утсан-утсан чарăну тĕлне çитрĕ Марина. Сайра хутра çăмăл машинăсем ирте-ирте кайрĕç-ха малтан, анчах та вĕсене Марина алă çĕклесе чарăнма ыйтмашкăн хăяймарĕ. Çумра вак укçа кăна юлнăччĕ те... Автобус е ГАЗель килесси кĕтрĕ. Темиçе сехет ĕнтĕ пĕр машина та курăнмасть авă. Маринăн калле-малле сиккелеме те вăйĕ юлмарĕ. Темиçе уй урлă ял еннелле тинкерчĕ вăл. "Пулăшăр тархасшăн! Шăнса вилме ан парăр!" – тесе пĕр-пĕр кил хапхинчен пырса шаккама та хирĕç марччĕ, анчах унта юр ашса çитеймĕн. Кĕсье телефонĕ те сивве чăтаймасăр паçăрах сÿннĕ ĕнтĕ.

Хĕр хÿтлĕх шыраса чарăнури сак çине пырса ларчĕ. Пичĕ тăрăх вĕри куççулĕ шăпăртатрĕ унăн. Миçе сехет тăрать-ши вăл урамра? Иккĕ-ши, виççĕ-ши... Хĕвел те анма хатĕрленет авă, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлти пĕлĕт хĕп-хĕрлĕ курăнать. Тепĕр машина вĕçтерсе иртсе кайрĕ... Кĕтесре лăп-чăннă хĕре вăл асăрхамарĕ те.

Мĕнле майпа пырса çакланчĕ-ха Марина мур шăтăкне? Юратнă вĕрентекенĕ Глафира Дмитриевна патне кайма тухнăччĕ вăл. Унпа чылай вăхăт çыру çÿрететчĕç, кайран телефонпа çыхăнкаларĕç. Качча кайман, ача-пăча çуратман



учительница Шупашкарта пурăнатчĕ малтан. Амăшĕ хавшаса çитсен ăна пăхма яла куçса кайрĕ. Халĕ вĕрентекен хăй те 70-е çывхарать, кун-çул панă çынни те тахçанах çĕре кĕнĕ. Глафира Дмитриевна Маринăна вĕçĕмех хăй патне хăнана чĕнчĕ. Акă эрне каялла кăна-ха телефонпа шăнкăравласа ура хуçни çинчен пĕлтерчĕ ватă çын. Марина шăпах отпускраччĕ те учительницăна пырса пулăшма шантарчĕ.

Автобусра икĕ хĕрарăм калаçни Маринăн хăлхине кĕчĕ: ку тăрăхра чаплă юмăç пурăнать иккен, шăпах çавăнта кайма тухнă та хайхискерсем. Маринăн хăйĕн инкекĕ – вăтăртан иртнĕскер çемье çавăраймасть. "Сана пăснă, нихăçан та качча каймалла мар тухатланă", – çапла каланăччĕ ăна тĕшмĕше ăнланакан пĕр çын, юмланине сирмелле-мĕн. "Тепре хăçан çитĕпха ку тăрăха, çав çынсенчен юлас мар", – шухăшларĕ Марина. Çапла майпа хăйĕн чарăнăвĕнчен иртсех кайрĕ вăл. Кайран автобуса контролерсем чарчĕç. Çул укçине тÿлесе çитерейменнишĕн Маринăна штраф тÿлеттерчĕç. Хĕрлĕ хăюллă çынсемпе тавлашса тăнă вăхăтра юмăç патне кайма тухнă икĕ хĕрарăм куçран çухалнă. Анчах çакна автобус тапранса кайнă хыççăн кăна асăрхарĕ хĕр. Çурма çулта транспорта чарма ыйтаймарĕ: ахаль те уншăн водителе ят тиврĕ-çке, пассажирсем те кăмăлсăрланчĕç. Çапла вара Марина çул хĕресленĕвĕнче чуххăмăн анса юлчĕ. Аташасси çакăнтан пуçланчĕ те. Каялла каяс вырăнне пачах урăх çул çине пырса тухрĕ...

Тавралăха кăвак çутă хупăрланăччĕ. Марина чарăнура хускалми ларчĕ. Вăл сивве туйма та пăрахрĕ ĕнтĕ. Пурнăçри асра юлнă хăш-пĕр самант тĕлĕкри евĕр мĕлтлетрĕ... Çар хĕсметĕнчен чĕрĕ таврăнайман пĕрремĕш юратăвĕн сăнарĕ куç умне тухрĕ. Каччă Маринăна хăйпе пĕрле пыма чĕнет пек, унта ăшă, йăлтах шап-шурă, çутă... Çав çутă сасартăк машина фарипе пĕрлешсе кайрĕ. "Эсĕ чĕрех-и?" – Марина арçын сассине илтрĕ. Палламан çын юн таппине тĕрĕслерĕ те пикене алă çине çĕклесе салона кĕртсе лартрĕ, шăнса кÿтнĕ хĕре кĕрĕкĕпе витсе ячĕ. Машина хускалчĕ. Çул çинчи кафе тĕлне çитсен водитель вĕри чейпе бальзам хутăшĕ илсе туха ĕçтерчĕ. Маринăна больницăна леçсе хăварасшăнччĕ те, анчах пике çине тăрсах хирĕçлерĕ.

...Çĕрле кăна хăйĕн хваттерне çитсе выртрĕ Марина. Тепĕр кун çăлавçă шăнкăравласа хĕрĕн сывлăхĕпе кăсăкланчĕ. Пырĕ ыратнăран чиперкке унпа йĕркеллĕ калаçаймарĕ. "Пыл илсе килетĕп, чей хатĕрле", – ăшшăн сăмахларĕ йĕкĕт. Çак самантрах Маринăна вăй кĕчĕ тейĕн, унăн пурăнас, савас килчĕ.

**Алина ИÇĔМПИ.**

ПУЛАТЬ ВĔТ

# Чечексемсĕр, парнесемсĕр...

Паянхи пекех хитреччĕ çав кун. Йывăçсем шап-шурă шупăрпаччĕ. Питрен пăртак сивĕ чĕпĕтетчĕ. Юр пĕрчисем сывлăшра çаврăна-çаврăна ташă ташлатчĕç. Хĕл кунне ачаран юрататăп та, шартлама сивĕ-и, çил-тăман алхасать-и – кăмăл кирек хăçан та çĕкленÿллĕ. Красноармейски тăрăхне ĕçпе кайнăччĕ те хулана тĕттĕмленеспе кăна çитрĕм. Автобусран анма ĕлкĕреймерĕм, телефон шăнкăртатрĕ: "Сывă-и, сасран паллаймастăн пуль-ха. Эпĕ сана ĕçре темиçе те курнă, хирехирĕç ларса чей те ĕçнĕ, "– илтĕнчĕ тепĕр вĕçĕнче арçын сасси.

Унтанпа виçĕ-тăват çул иртсе кайнă пулин те кам шăнкăравланине уйăрса илме йывăрах пулмарĕ. Çапах та телефон номерне ăçтан, камран тупнăши? Вокзала çитсен киле леçсе яма та пулчĕ, хирĕçлерĕм. Тахçан пĕр-ик сăмах çеç хушкаласа курнă арçынпа курнăçма аванмарлантăм та.

Тепĕр кунне Саша ирех вăратрĕ. Ялтан тÿрех Çурçĕре туха кайнăскер хулана лайăх пĕлмест имĕш. Шупашкарпа паллашасшăн, лавккасене çитсе курасшăн. Шăмат кун пулнă май – килĕшрĕм. Йывăр-и мана машинăпа ярăнса çÿреме? Чи малтан спорт лавккине çул тытрăмăр. Кам валли, ыйтса тиркемерĕм, тÿрех икĕ мăшăр йĕлтĕр туянчĕ. Чечексем юратать иккен. Йывăç йышшисем кирлĕ тет. Лавккаран икĕ тĕрлĕ фикус, пальма йăтса тухрăмăр. Чÿрече каррисене те çĕнетесшĕн, анчах пĕччен суйлама пĕлмест. Хама та интереслĕ те, хаваспах килĕшрĕм. Кафене кĕрсе чей ĕçрĕмĕр – пирĕн кун иртсе те кайрĕ. Хĕл кунĕ калама çук кĕске вĕт.

Вырсарни кун Саша каллех шăнкăравлать. Вăл йĕлтĕрпе ярăнасшăн, анчах та ăна пĕччен кичем. Мĕнех, хирĕçлемерĕм. Уçă сывлăшра çÿреме эпĕ яланах хавас. Кану кунĕ пулнă май, манăн та пушă вăхăт туллиех. Çывăхри парка çул тытрăмăр. Халăх нумай, ача-пăча хĕвĕшет кăна. Йĕлтĕр çине темиçе çул тăрса курманскер, сăртран вĕçтерсе аннă чухне темиçе хутчен персе те антăм. Пит, хăлха пĕçерекен пуличченех ярăнтăмăр.

Кил умне çитсен Сашук йĕлтĕре мана тыттарчĕ. Çитес кану кунĕнче татах ярăнма каяс шухăшлă. "Эпĕ кĕтсе тăратăп сана, киле кĕрсе тух та, çывăхри кафере чей ĕçсе ăшăнăпăр ", – тесе алăка уçма пулăшрĕ.

Шăнса кайнă тусăма нумай кĕттермерĕм. Чейне ĕçме киле те чĕнме пулатчĕ те, хăюлăх çитерейменрĕм. Вăрахчен калаçса лартăмăр. Сашука пĕччен пурăнса йăлăхтарнă-мĕн. Куçран шăтарасла пăхса çемье çавăрас шухăшлă пулнине каларĕ. Эпĕ шÿтлекелесе иртерсе ятăм.

Эрне варринче вăл ман пата пĕр чарăнми шăнкăравласа йăлăхтармасть. Ăнланать ĕçĕм нумаййине. Кану кунĕсенче



вара килте лартмасть. Йĕлтĕр хыççăн коньки çине куçрăмăр. Пĕр кунхине бассейна илсе кайрĕ. Чун каниччен чăмпăлтатрăм шывра. Пĕрре те кичем мар Сашукпа. Кирек хăш самантра пулăшма хатĕр тусăмшăн чунтан савăнатăп. Вăл манпа юрату çинчен калаçмасть, пĕрле вырăн ăшăтма ыйтмасть. Алăк умне çитерет те ăшшăн ырă каç сунса сыв пуллашать.

Эрне кун ĕçрен кĕтсе илчĕ те хăнана чĕнчĕ. Хайхи çĕнĕ чÿрече карисене кăтартасшăн. Хваттерте пĕччен арçын пурăнать тесе калаймăн. Хăтлă, таса та çутă. Вун-вун тĕрлĕ чечек залра. Кашни япала хăй вырăнĕнче. Эпĕ, тĕрĕссипе, ытлашши утăм тума та иментĕм. Карăсене суйланă чухне йăнăшман иккен, обойпа питĕ килĕшсе тăраççĕ. Сашук тутлă чейпе хăналарĕ. Кайран ăшшăн хăй çумне çупăрларĕ те: "Куçса кил ман пата, кичем сансăрăн, эпир малашне пĕрпĕринсĕр пурăнаймастпăр пуль", – терĕ.

Вунă çул иртрĕ унтанпа. Чечексемпе парнесемсĕр, юрату сăмахĕсемсĕрех пĕрлешрĕмĕр эпир. Хĕр пĕрчи часах тăхăр çул тултарать. Сашук мана халĕччен пĕр усал сăмах та каласа курман. Хĕрарăм ĕçĕ тесе те тиркешмест, апат та пĕçерет, япала та çăвать. Ачапа уçăлса çÿрекенни, урок тăваканни те вăлах. Пĕр уявра та парнесĕр хăвармасть. Укса-тенке те пĕрле тытатпăр. Мансăр пурăнайманнине, чунтан юратнине вара хăй каламасăрах, кашни кун унăн ăшă та ырă куçĕнче куратăп. Кану кунĕсенче Сашук килте лартмасть пире. Йĕлтĕр сырнă хыççăн çывăхри хыр вăрманĕнчен тухма пĕлместпĕр. "Сивĕ хĕл кунĕ санпа паллаштарчĕ, çавăншăнах çак вăхăта юрататăп", – тет те Сашук пуçне ман хул пуççи çине хурать. Эпĕ те вăл пĕрремĕш хут шăнкăравланă куна асран кăлараймастăп. Сашуксăр мĕнле шăпа кĕтетчĕ-ши мана?

**ЕЛЕНА.**
Шупашкар районĕ.

ВУЛАКАН ПУЛТАРУЛĂХĔ

*Геннадий ИЗОСИМОВ*

# Сарлака сакăн та хĕрри пур...

### Манăн анне

Çтаппан кукаçин çемйи чухăн пулнă. Тăван мар аслă хĕрĕ Евтук тата манăн пулас анне Пăлаки хуçалăхра ĕçленĕ, кукамайăн иккĕмĕш упăшки Çтаппан пур пĕрех 2 хĕрне тата арăмне «харам пырсем», «çăкăр хурчĕсем» тесе хăртнă. Ывăлне Кĕркурине çеç кӳрентермен: ăна çĕр панă-çке. 22 çул тултарсан Евтука качча параççĕ. Халь тăван мар ашшĕн куç умĕнче Пăлаки курăнса тăрать, унтан хăтăлмалла. Пăлаки хăй нимĕн те шарламасть, пуç çĕклемесĕр ĕçлет. Çав вăхăтра кукаçи ăна валли каччă шырать. Пăлакие пуян Петровсен ывăлĕ юратать, хĕр хăй те ăна килĕштерет. Анчах та каччăн ашшĕ-амăшĕ чухăн çын хĕрĕ тата тăлăх тесе ывăлне ăна качча илме чарать. Пăлаки вăрттăн йĕрет. Хăйĕн хуйхине никама та каламасть. Çакăн хыççăн «никама та качча тухмастăп» тесе шухăшлать. Анчах та вăл шухăшланă пек пулмасть, пурнăç малаллах шăвать.

### Манăн атте

Манăн асатте Лазарь чухăн хресчен çемйинчен тухнă. Раççейре крепостла правăна пĕтернĕ вăхăтра, 1883 çулхи кĕркунне, çĕрле чĕп куç çутипе асаттен пĕрремĕш тата юлашки ывăлĕ, манăн пулас атте, çуралнă. Ăна Иван Лазарев ят панă. Асанне çуратнă хыççăнах ывăлĕ çине пăхса илнĕ те кăкăрне ĕмĕртеймесĕрех вилсе кайнă. Вăл вăхăтра эпи карчăкĕсем анчах çураттарнă. Акушерсем ялта мар, вулăсра та пулман. Асатте хăй те çамрăк. Тин çеç çуралнă ывăла чĕчĕ çитерме камран пулăшу ыйтмалла? Ачан çиес килни йывăç çулçи çĕре çити вĕçсе аниччен анчах. Атте амăшĕн сĕт тутине те пĕлеймен, сывăх çыннипе ачашланса та ĕлкĕреймен. Унăн ăшшине туймасăрах юлнă. Асатте ăна çав вăхăталла кам ача çуратнă, камăн ачи вилнĕ – çавăн пек илсе çӳресе тăрантарса усранă. 6 çула çитиччен ӳстернĕ. Асатте вăтам пӳллĕ, ырхан, пысăк куçлă, качака сухаллă, ырă чĕреллĕ, лăпкă арçын пулнă. Асанне вилсен питĕ куляннипе тек авланма шухăшламан.

Вĕсем аттепе иккĕшĕ кивĕ пĕчĕк пӳртре пурăннă. Хĕлле кăмака хутса ăшăтсан тĕтĕмне алăк уçса кăларнă, хăйсем урайĕнче тумтирпе ларнă. Тĕтĕм майĕпен çенĕке, унтан ăçта шăтăк пур – унталла туртăннă, çӳлелле кармашнă. Пӳрт ăш-чикки тĕтĕм-сĕрĕмпе хуралнă. Çапах та çакăн пек çуртсенче те пурăннă çынсем, çемьеленнĕ, 5-8 ача çуратнă.

Хĕлле те, çулла та ĕçĕçи вăхăтĕнче асатте ывăлне киле пĕччене питĕрсе хăварнă. Иван сарлака сак çинче çара кут çывăрнă. Вăрансан кушакпа вылянă, унпа çăкăр татăкĕшĕн çапăçнă. Кунĕпе выляса ывăнсан кушакпа ыталансах çывăрнă.

Атте 6 çул тултарсан, асатте ăна пĕрремĕш хут 7 çухрăмри Елчĕке ярмăрккана илсе кайнă. Çуран утнă тусанлă çулпа. Елчĕке çитсенех асатте трактира кĕрсе пĕр пулăштух хĕрлĕ эрех илнĕ. Атте валли темиçе кĕлентĕр, шăхлич тата тем те пĕр туяннă, япаласене пештĕре чикнĕ те ярмăрккара курса çӳренĕ. Каруççельпе çавраннă. Курса çавраннă хыççăн тусанлă çулпа килелле утнă.

1890 çулхи çуркунне, атте 7 çула кайсан, асатте шăнса чирлет, ӳпки шыçса каять. Вырăнпах выртма пуçлать. Ялти юмăç карчăкĕсем вĕрсе-сурса та пăхаççĕ, нимĕнпе те пулăшаймаççĕ. Çапла 10-12 кун нушаланса выртнă хыççăн асатте йывăрланса çитет. Мăнкун ыран тенĕ каçхине çынсем нумайăшĕ чиркĕве кайнă. Асатте килтен тухайман. Тĕттĕм çĕр майпен шунă, аттепе иккĕшĕ яланах пĕрле выртнă. Ун чухне çутăла пуçличченех калаçса выртнă. Асатте вăйсăрланнă аллипе сăх-сăхнă та юлашки хут ывăлне чуп тунă.

– Халь, ывăлăм, вилетĕп, çурта çут. Телейлĕ пул, эпĕ сана телейлĕ тăваймарăм. Сывă пул...

Çур сехетрен асаттен чунĕ тухнă. Çапла атте хăр тăлăх тăрса юлнă. Унăн тетĕшĕ те, аппăшĕ те пулман. Пĕртен пĕр аякри тăванĕ Йăкăнат тетĕшĕ аялти касра хăйĕн çемйипе пурăннă.

Эпĕ ас тăвасса Йăкăнат тетен çемйи пысăкчĕ: 2 хĕр, Матрена тата Ульха, 2 ывăл, Юман тата Федор. Йăкăнат тете вăтам пӳллĕ, яштака, ырхантарах, илемлĕ питлĕ, çиллесрех кăвак куçлă, çирĕп ыйтакан, анчах ырă кăмăллă, хуçалăха лайăх тытса пыракан çын пулнă. Вăл 1841 çулта çуралнă /1929-мĕшĕнче вилнĕ/. Инкене кăшт çеç ас тăватăп. Вăтам пӳллĕ, ырхантарах, тăрăхла питлĕ, усал мар, хăйне хăй тытма пĕлекен хĕрарăмччĕ. Вăл Йăкăнат тетерен 8-9 çул маларах вилнĕ. Тулăх пурăннă вĕсем. Хуçалăхĕ тĕреклĕ, пӳрчĕ шурă. Вăл вăхăтра мăрьеллĕ кăмака пулсан ăна шурă пӳрт тенĕ. Кил карти пысăк, ăшă витесем пулнă. Çырма хĕрринче мунча ларнă. Лашасем, ĕнесем, сурăхсем, хур-кăвакал тытнă. Йăкăнат тетен ачисем пĕчĕк чухне ĕçлекен кирлĕ пулнă. Тăлăха юлнă 7 çулти аттене хăйсем патне усрава илнĕ. Пĕрлех – хура пӳртпе çĕрне те. Аттен хура пӳртне хупса хăварнă. Тетепе инке хăйсем те ĕçлеме ӳркенмен, аттене те пĕчĕкккĕллех явăçтарнă. Инке тăлăха пуçĕнчен ачашланă, çакă тем пекех савăнăç пулнă: амăшĕн алли сĕртĕнсе курман-çке ăна. Мĕнле çемçе те ăшă иккен хĕрарăм алли... Малтанхи вăхăтра аттене вăй çитекен ĕçсене тутарнă. Ӳссе пынă май кăткăсраххисене шанма пуçланă: лашасене çитерме уя е вăрмана илсе каймалла, çуркунне акана тухмалла, сӳремелле, сухаламалла, акмалла, уттине те çулмалла, типĕтсе пуçтармалла. Кĕркунне тырă вырмалла, кĕлте çыхмалла, йĕтем варне турттарса капана хывмалла, çапмалла, сăвăрмалла, вăрлăх валли суйламалла... Пурне те алă вĕççĕн тунă. Атте пысăккисенчен пĕрре те юлман. Малтанхи вăхăтра ашкăнсан кĕтессе те тăратнă. Ăнсăртран пĕр-пĕр инструмента пăссан саламат та çурăм çинче ташланă. Çапла иртсе пынă аттен ачалăхĕ, çамрăклăхĕ...

### Çапла пĕрлешнĕ

Пĕррехинче хĕлле Çтаппан кукаçи юлташĕсем патĕнче хăналаннă. Вăта касри урамра пурăнакан Йăкăнат кин шыранине пĕлет хайхи: тăлăх Иван валли арăм кирлĕ пулнă. Тетен ачисем ӳссе çитĕннĕ, ĕçлеме хăнăхнă. Çавăнпа та Ивана авлантарса уйăрса кăларасшăнмĕн. Каччăн ашшĕпе амăшĕнчен юлнă пĕчĕк, тайлăк пӳрчĕ хыçалти урамра 10 çул пушă ларать. Иван ĕçлеме ӳркенмест, каланине итлет, мăн кăмăллă мар. 17 çул тултарнă, авлантармалла. Çтаппан кукаçи Пăлакие тупса пама шухăшлать. Хĕр 20 çулта. Ĕçлеме ӳркенмест. Хура çӳçлĕ, пысăк куçлăскер ырхантарах ĕнтĕ. Анчах мĕн тăвăн – йăхĕ çапларах. Кукаçипе Йăкăнат тете пĕр чĕлхе тупса хăйсен хушшинче калаçса татăлаççĕ: кĕркунне хирти ĕçсем вĕçленсен Иванпа Пăлакие пĕрлештерсе туй тумалла. Çамрăксем çеç нимĕн те пĕлмеççĕ-ха. Каччăпа хĕр калаçса та курман. Пĕри ял пĕр вĕçĕнче, тепри тепĕр вĕçĕнче пурăннă. Вăййа та тухса çӳремен. Вăхăчĕ те пулман: кăнтăрла та, çĕрле те ĕçленĕ.

Хĕрĕн ĕç тăкăс пулнă: кантăр пуссине татмалла, шыва хутмалла, кайран кăлармалла, тылламалла, тӳмелле, пĕтĕрсе арламалла, пирне тĕртмелле... Çине тăхăнма йĕркеллĕ кĕпи те, урине сырма çăпатасăр пуçне нимĕн те пулман.

Кĕркунне çитнĕ. 1900 çул. Кĕрхи ĕçсем вĕçленсен Йăкăнатпа инке Иванпа аякран сăмах пуçарнă. Çынсен ачисем авланаççĕ, çĕр илеççĕ, уйрăлса тухаççĕ, çурт çавăраççĕ, хăйсем тĕллĕн пурăнаççĕ. Иван пӳрчĕ вара 10 çул çапса хунă чӳречесемпе ларать.

– Эсĕ мĕн шухăшлатăн, Иван?

Атте пăлханса кайса пуçне кăна усать. Йăкăнат тете ыйтать:

– Иван санăн савакан хĕр пур-и?

Каччă вара хĕрсемпе хире-хирĕç тăрса та курман. Сăмах ял вĕçĕнче пурăнакан Пăлаки патне çитет. Лайăх хĕр, сывлăхлă, илемлĕ, ĕçлеме ӳркенмест, унтан лайăххи çук сан валли ялта. Иван ăнланать: сăмах татнă, ниçталла та пăрăнма çук... Анчах ачи 17 те тултарман вĕт-ха.

/Вĕçĕ пулать./.

СĂВĂ СĔВЕМĔ

*Любовь ЛĔПĔШПИ*

## Сивĕ юрĕ çурĕ

Сивĕ юрĕ çурĕ...
Çамрăк пилеше
Мамăк шурă тутăр
Питĕ килĕшет.
Сивĕре кăварлă,
Çулăм пек çырли.
Сыхласа хăварнă
Шăп та сан валли.
Саншăнах саватăп
Çамрăк пилеше,
Мамăк юр мана та
Питĕ килĕшет.
Пилешпе тăратпăр
Шăппăн пахчара,
Юр айне пулатпăр
Тахăш самантра

## Хĕл каçĕ

Уйăх шăппăн тухса çакрĕ
Хăйĕн сарă хунарне.
Ушкăн çăлтăр тухса сапрĕ
Тĕксĕм-тĕксĕм тӳпене.
Ах, ытла хитре хĕл каçĕ
Вут çунсассăн чĕрере.
Çăлтăрсем савса пăхаççĕ
Сан çине чӳречерен.
Уйăхпа пĕрле кĕтетпĕр
Кăлăхах сана паян.
Эс тухманнине пĕлетпĕр,
Пур пĕр шанчăк пур-ха ман.
Эс пĕлсемччĕ, тусăм, саншăн,



Саншăн çеç чĕре юрлать.
Çăлтăрсем сана курасшăн,
Уйăх саншăн çутатать...

## Шур юра йĕрлетĕп эпĕ

Шур юра йĕрлетĕп эпĕ
Йĕлтĕрпе пит васкаса.
Сана хирĕç вĕçтеретĕп,
Эс килетĕн ман аса.
Шур паспа вăрман пĕркеннĕ,
Юмахри пек, эсĕ кур.
Йĕлтĕр айĕнче илемлĕн
Сан çинчен юрлать сив юр.
Ытарми сăнатăп эпĕ
Хĕл пилленĕ илеме.
Тухрăн эсĕ те, сисетĕп
Йĕлтĕр йĕрĕ тĕрлеме.
Сывлăшра вĕçеççĕ авă
Шурă-шурă лĕпĕшсем,
Кунĕ ырă, кăмăл савăк,
Ыттине хăвах сиссем

## Çут телей сунатăп кăмăлтан

Сив çилсем епле тулта улаççĕ,
Вĕлл! вĕçеççĕ шурă лĕпĕшсем.
Чĕрене вара вут хыптараççĕ
Çĕмĕрт тĕслĕ ырă куçусем.
Савнă тусăм, инçетре
пулсан та
Ĕмĕтре эс пур пĕр юнашар.
Сивĕ çилĕ шур юрпа
сапсан та
Хытăрах çунать чунри кăвар.
Ĕмĕтре кăна сана куратăп,
Пулас çук эпир пĕрле нихçан.
Эс пурришĕн пур пĕр
савăнатăп,
Çут телей сунатăп кăмăлтан.

## Хĕл илемĕ

Ушкăн çăлтăр çĕрĕпе
Вăй вылярĕ тӳпере,
Юр пĕрчи пулса ирпе
Вĕлтĕр! тăкăнчĕ çĕре.
Шур кĕпеллĕ пикесем
Кур-ха: кĕмĕл çакнăнах,
Пас хупланă хурăнсем
Илĕртеç аякранах.
Куç тулли çак илеме
Парнелет пире сив хĕл.
Ун асамлă кĕввине
Чунупа туймашкăн пĕл.

## Ăсталарĕ ывăл сырăш

Ăсталарĕ ывăл сырăш,
Çакрĕ шăп та пӳрт умне,
Илчĕ çăкăр, сапрĕ тырă,
Хучĕ кавăн вăррине.
Хăй пӳрте кĕрсе вырнаçрĕ
Кантăк витĕр сăнама.
Кайăксем çаплах пăхаççĕ,
Шикленеççĕ-ха ларма.
Ак çерçи хастаррăн пычĕ,
Çитрĕ сарă кăсăя.
Йăл çиçет халь ывăл пичĕ,
Тиркемерĕç-çке сăя!
Тиркешсе питех тăраймăн,
Хĕл пурне те хăратать.
Выçăлла сивве чăтаймăн,
Тутă хырăм – ăшăтать.
Пулăшсах пырасчĕ пирĕн
Çак çунатлă туссене.
Çу ситсессĕн каçăн-ирĕн
Итлĕн савăк юррине.
...Ăсталарĕ ывăл сырăш,
Çакрĕ шăп та пӳрт умне,
Илчĕ çăкăр, сапрĕ тырă,
Пулăшмашкăн туссене.

## Туспа – сивĕ хĕл хаяр мар

Тулта сивĕ хĕл, çил-тăман
алхасать.
Эх, ăшă пӳртрех пит аван!
Анчах мĕн сасси. Кам васкавлăн
шаккать
Эрешлĕ кăвак кантăкран?
Хама сивĕ мар та – манаттăм
чутах
Çунатлă туссем пуррине.
Ик тус-кăсăя выçăпа аптрасах
Ав килнĕ вĕçсе кил умне.
Турат вĕçнелле эп çакатăп сив çу,
Туссемшĕн – чи тутлă апат.
Çук, çук, пуçламаççĕ вĕсем
çапăçу,
Хаваслă ик тус-акробат.
Ула кураксем е чана хыпас çук
Çиппе çакнă хаклă сăя.
Çилпе хускалсассăн та
техĕмлĕ çу,
Унта ларатех кăсăя.
Çапать çунатне, тĕрлĕ май
çавăрать,
Сăхать апатне пит вăр-вар.
Туссем пуррине пĕчĕк чун та
туять,
Туспа – сивĕ хĕл хаяр мар.
Тулта – хĕл юрри, çил-тăман
алхасать,
Эх, ăшă пӳртрех пит аван!
Чунра та хĕвел пăхнăнах туйăнать
Туссем хушăнса пынăран.

**Алексей Глызин 60 çул тултарнине кам та пулин ĕненме пултарать-и? Анчах ку чăнах та çапла. Паллах, ăна паянхи поп-çăлтăрсемпе те, секс-символсемпе те танлаштарма çук. Вăл, кĕвĕ-юрă тĕнчинче вăрăм ĕмĕрлĕскер, ытларах хоккеиста е паттăр комсомолеца аса илтерет. Ну, тен, БАМ тума хутшăннă йĕкĕте... Пĕр сăмахпа, лайăх арçын... Автан мар... Ахăртнех, çак сăлтавпах Алексей Глызина, чи пултаруллă вокалистсенчен пĕрне, телекăларăмсен Çĕнĕ çулхи уяв программисенче курма çук.**

# Чĕрене çунтарнă, çемьене аркатнă юрату



**Иртнĕ ĕмĕрти 80-мĕш çулсенче чапа тухнă юрăç çула çитмен хĕр пĕрчишĕн çемйине пăрахнă, “Веселые ребята” ушкăнран тухса кайнă**

### Вăт ку – сасă!

...Пĕррехинче Италире, Каприрен Соррентона таврăннă хыççăн, юлташсемпе усă кафере лараттăмăр. Хĕвеллĕ çанталăк. Чăнкă çыран. Ахăртнех, тахçан сиренăсем Одиссея шăпах çакăн пек вырăнтан астарнă, илĕртнĕ. Тинĕс кăвакăн-хĕрлĕн ялкăшать... Пăр пек шурă “Фраскати” шуса иртет. Йĕри-таврах хура итальяшкăсем хĕвĕшеççĕ. Чарлан пек чакăлтатаççĕ. Çак вăхăтра тантăшăм айфонне хута ячĕ. Глызин. “Поздний вечер в Сорренто”. Итальянсем тăрукках шăпланчĕç. Вĕсен куçĕсем чарăлнине асăрхатăп. Пиццисене чăмлама пăрахсах пирĕн сĕтел енне тинкереççĕ. “Перфетто! – теççĕ хайхисем юрă вĕçленсен. – Перфетто!..” Вĕсенчен пĕри каярахпа пирĕн тинкене кăларчĕ – чăнах та вырăс çапла юрлать-и? Вăт ку – сасă!

### Арăмĕнчен тухса тарнă

Унăн концерчĕсем хыççăн кашни хулара мĕн чухлĕ чĕре асапланнине, куççульпе пĕвеннине кам та пулин шутланă-ши? Пĕр вунă çултан мемуар çырма ларсан Глызин романтикăллă туйăмпа тулнă миçе историе шурă хут çине куçарма пултарать-ши? Вĕсен сюжечĕпе усă курса сериал ўкерес тесен Бразили тата Мексика режиссерĕсем кĕвĕçнипе ăсран тайăлĕç!

Çапах та çуралнă кунĕнче кумир пурнăçĕнчи пĕлтерĕшлĕ самантсем çинчен калаçас килет. Калăпăр, Алексей Глызин хăй те хĕрарăмсене пула пуç çухатни çинчен.

Шăп виçĕ çул каялла Глызинăн хальхи арăмĕ Сания упăшки сулахаялла та сылтăмалла чупнине чăтаймасăр уйрăлмашкăн ыйту çырни пирки пурте пĕлеççĕ пулĕ ĕнтĕ. Мĕнпе вĕçленнĕ çав ĕç – çакна хăйсемсĕр пуçне, ахăртнех, никам та пĕлмест. Анчах çак мăшăр ним пулман пек алăран-алла çавăтăнса утнине нумаях пулмасть куракансем тупăннă.

– Уйрăласси пирки сăмах пымасть халĕ. Пурнăçра темĕн те пулать вĕт... – сăмаха айккинелле пăрма тăрăшать юрăç.

Çакăн пек истори Глызин пурнăçĕнче маларах та пулса иртнĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче юрăç çула çитмен чиперккене юратса пăрахнă та... пĕрремĕш арăмĕнчен Людмиларан тухса тарнă. Пикене Женя Герасимова тесе чĕннĕ.

### Виç кĕтеслĕх

Çакăн çинчен эпир чи малтанах тĕп хулари уявсем йĕркелекен агентство директорĕнчен Елена Гришинăран пĕлтĕмĕр – вăл вăхăтра хĕрарăм “Веселые ребята” ушкăн костюмерĕнче ĕçленĕ.

– Эпĕ ун чухне çап-çамрăкчĕ, – аса илет Елена. – Шоу-бизнес тĕнчине театр романтикăллă асамлăхĕнчен куçнăччĕ. Ăçта лекрĕм тесе минресе çÿреттĕм. Ушкăн ертÿçи Павел Слободкин пĕрремĕш гастрольтех вырăн пĕрле ăшăтма сĕннĕччĕ. Мана кун пек услови тивĕçтермерĕ. Вара арçын ман ят тавра темĕн тĕрлĕ усал сăмах сарма пуçларĕ. Паллах, кун пек нумай тăсăлма пултараймастчĕ, сыв пуллашса ушкăнран тухса кайма тиврĕ.

Леша Глызинпа эпир йĕркеллех хутшăнаттăмăр. Пĕррехинче унăн гримеркине кĕтĕм те темĕнле йывăç таткисене асăрхарăм. Нумай шухăшласа тăмарăм – кăлартăм та ывăтрăм. Глызин вĕсемпе пушмак кĕлли вырăнне усă курнине кам пĕлнĕ-ха? Леша гримеркăна кĕчĕ те хайхи йывăççем çуккине асăрхарĕ. “Эпĕ вĕсемсĕр сцена çине тухмастăп”, – тет. Пĕтрĕмĕр! Хам мĕн кăларса пенине пĕлсен хăвăртрах çÿп-çап ешчĕкĕ патне ыткăнтăп. Леша пĕвĕпе пĕчĕк пулнишĕн питĕ вăтаннă иккен, сцена çине тухнă чух яланах пушмак тĕпне çав йывăç таткисене хурса тухнă. Пĕррехинче Паша Слободкин унран çакăншăн тăрăхласа та илнĕччĕ-ха.

87-мĕш çулта ушкăн “Огонек” телекăларăмра “Не волнуйтесь, тетя” юрра юрланăччĕ. Володя Пресняков Глызина 17-ри Женя Герасимовăпа паллаштарнă. Кам пĕлнĕ-ха çапла пулса тухасса? Тепĕр тесен, çамрăк чиперккене юратмасăр майĕ те пулман. Тĕлĕнмелле куçлăскер, нимĕнрен те, никамран та вăтанманскер... Леша ун чухне Людмилăпа пурăннă, вĕсен ывăлĕ 12 çул тултарнă. Çакна çирĕплетсех калама пултаратăп – Леша çемьерен шăпах Женьăна пула тухса кайнă. Тата çакна каламa пултаратăп – Женьăна юратнă пек Леша пĕр хĕрарăма та юратман. “Ты не ангел” юрă – Женьăна халалланăскер. Анчах та Глызинпа виçĕ çул кăна пурăнчĕ Женя, “Земляне” ушкăн музыканчĕ Слава Махренский патне тухса кайрĕ. Пĕр вăхăт юрату виç кĕтеслĕхĕ виççĕшне те çунтарчĕ, Женя Лешăпа Слава ушшинче хăшне суйласа илмеллине те пĕлмерĕ. Пĕр вăхăт Махренский хăй çĕнтернине мăнаçланса çÿремех пуçланăччĕ ĕнтĕ, анчах çав самантра машинăра мирлĕн кăна калаçса ларакан Женьăпа Лешăна асăрханă хайхискер. Унăн сăнне çав вăхăтра курасчĕ сирĕн! Леша Женьăшăн питĕ çунатчĕ. Унпа пĕрлех юлас, ăна каялла тавăрас тесе манран та пулăшу ыйтнăччĕ вăл. Махренский вара Ирина Аллегровăн экс-мăшăрĕ Владимир Дубовицкий патне пынă. Вăл ун чухне “Электроклуб” ертÿçиччĕ. Мана та çак ушкăна ĕçлеме чĕннĕччĕ.

### Укçасăр “кукка” кама кирлĕ?

Евгения Герасимовăна шыраса эпĕ Вячеслав Махренскипе çыхăнтăм. Экс-музыкант халĕ – хоккей агенчĕ. Унăн клиенчĕсен хушшинче – НХЛ шăв-шав çĕкленĕ вратарĕ Семен Варламов! Çапла-çапла, шăпах çавă – çырăнмасăр пĕрле пурăннă хĕрарăмне Вавринюка хĕнекенни.

– Мана качча тухнă чух Женя 20 çултаччĕ, эпĕ вара – 24-ра... – каласа кăтартрĕ Махренский. – Хитре кăна мар вăл, ăслă та. Пĕр сăмахпа, ун пек хĕрарăм пирки кашни арçын ĕмĕтленет. Лешăпа эпир яланах лайăх хутшăнаттăмăр, анчах та вăт çапла пулса тухрĕ, мĕн тăвăн? Женя мана суйласа илчĕ. Çултаlăкран эпир уйрăлтăмăр.

### Çамрăклăх

Çапах та Вячеслав мана Женьăна шыраса тупма пулăшрĕ. Герасимова халĕ – чăн-чăн бизнес майри: строительство пысăк компанине ертсе пырать. Евгения мана Мускаври чи хаклă ресторансенчен пĕрне чĕнчĕ.

– Лешăна эпĕ çирĕм пилĕк çула яхăнах курман, – пуçларĕ хĕрарăм сăмахне. – Вăл манăн пĕрремĕш арçын пулман, анчах та эпĕ ăна чăнласах юрататтăм. Пуç та çаврăнăтăр: вăл çăлтăр вĕт-ха, эпĕ вара 17-ре кăна. Ун хыççăн çĕр-шыври пĕтĕм хĕр тенĕ пек чупать, вăл вара маншăн çунать. Глызин чăнах та мана пула кайрĕ çемйинчен. Кулăшла пулса тухрĕ ун чухне. Эпĕ юлташсемпе дачăна кайнăччĕ. Анне шăнкăравлать: “Ăçта çÿретĕн эсĕ? Пирĕн пата санăн упăшку япалисемпех килчĕ. Таврăн”. Леша çăлтăр статусне çитнĕ пулсан та ун пирки пуян тесе калаймăттăм. Ас тăватăп-ха, гастрольсенче, эпĕ вара тăтăшах унпа пĕрле çÿреттĕм, Глызин валли чечеклĕ пусмаран кĕпесем çĕлеттĕм – сцена çине тухмашкăн костюмĕсем те çукчĕ унăн. Леша çапла йăла ыйтăвĕсене ман çине тиеме пуçларĕ те, эпĕ чăтаймарăм. Тепĕр тесен, эпĕ çакна хатĕр марччĕ. Вăл мана килте лартасшăнччĕ, кухньăна кастрюльсемпе хупса хурасшăнччĕ. Манăн вара хамăн та çăлтăр пулас килетчĕ.

Лешăна эпĕ халĕ кăна ăнланса пыратăп. Çемьерен кайма, чăн та, çăмăл мар. Ачалла утăм мар-çке-ха ку. Эпĕ нумай пулмасть кăна-ха шкултан вĕренсе тухнăччĕ ун чухне, çăмăл промышленнăç институтĕн хими факультетĕнче ăс пухаттăм. Анчах мĕн вĕренĕвĕ пултăр, енчен те эпир кунĕн-çĕрĕн гастрольсенче çÿретпĕр пулсан? Лешăпа пĕрле пытăмăр та документсене илсе тухрăмăр. Лешăн ĕмĕчĕ те пурнăçланаймарĕ – эпĕ çапах та “кастрюль вăрçине” хутшăнмарăм. Манăн хаваn та юлас килетчĕ...

**/«Экспрессс-газета»/.**

**ТĔНЧЕРЕ – ТĔРЛĔРЕН КĔНЧЕЛЕ**

### Ĕçкĕç упăшкашăн – 1,5 миллион тенкĕ

Мускавра пĕр предприятире ĕçлесе пурăнакан арçын килне пĕр сехет маларах каймашкăн ирĕк ыйтса илнĕ. Анчах арăмĕ патне çитеймен – çухалнă. Тепĕр кун хĕрарăм патне хайхи арçыннăн юлташĕ шăнкăравланă: унăн упăшкине палламан çынсем ирĕксĕр тытса тăраççĕ-мĕн, 1,5 миллион тенкĕ тÿлемесен ямаççĕ. Хĕрарăм палăртнă чухлĕ укçана тупнă – пĕлĕшĕсенчен кивçен илнĕ, шăнкăравлакана панă. Пĕр вăхăтран хватерте татах шăнкăрав янăранă – укçана кирлĕ çĕре çитернĕ, анчах та арçын хальлĕхе Мордовире, ăна эрне кун кăна ирĕке яраççĕ.

Вăхăт иртнĕ. Упăшки киле ниепле те таврăнманнине кура хĕрарăм полицие шăнкăравланă. Лару-тăру оперативниксем пулăшнипе уçăмланнă. Арçын пĕлĕшĕ Тула облаçĕнчи шăнкăравлани паллă пулнă. Хĕрарăмăн упăшкине никам та вăрламан-мĕн. Ăна йĕрке хуралçисем Тула облаçĕнчи хăна çуртĕнче шыраса тупнă. Арçын сĕм ÿсĕр пулнă. Следстви пырать.

### “Бураново кинемейĕсен” йышĕ чакнă

Удмуртире Елизавета Зарбатова 87 çула çитсе вилсе кайнă. Вăл “Бураново кинемейĕсенчен” чи асли пулнă.

Ушкăн пресс-секретарĕ Светлана Сырыгина пĕлтернĕ тăрăх, хĕрарăм, çулĕсене кура, сцена çине тахçантанпах тухман, анчах “Кинемейсем” шăпах вăл çырнă юрăсене шăрантарнă. 2012 çулта “Раççей” телеканал “Евровидение” валли иртернĕ конкурса удмурт коллективĕ шăпах Зарбатова çырнă “Пучоко” юрăпа хутшăнса çĕнтернĕ. Унтанпа “Бураново кинемейĕсен” нумай юрри хита çаврăннă. Нумаях пулмасть вĕсем Олимпиадăна халалласа “Çил” юрă çырнă. Ун тăрăх клип ÿкересшĕн. Вăйĕсем пуçланиччен ушкăн “Еврокуравра” янăранă Party for everybody кĕввипе тепĕр юрă хатĕрленĕ – Sochi for everybody.

### Акушерка... ача сутнă

Чжань Шуся /Китай/ амăшĕпе ачин центрĕнче ĕçленĕ. Тин çăмăлланнă хĕрарăмсене вăл вĕсен пепкисем йывăр чирпе çуралнине ĕнентернĕ, çавна май сусăрскерсене больницăрах хăварма ÿкĕтленĕ. Тин кăна çуралнă шăпăрлансене акушерка çынсемпе суту-илÿ тăвакансене панă. Ачасенчен пĕри çапла алăран алла куçнă май вилсе кайнă. Чăн та, пепке вилнĕшĕн хĕрарăма тÿреммĕн айăпламан, анчах та унăн пурнăçĕшĕн шăпах вăл хурăшлăх кăларса тăратнă тесе пĕтĕмлетнĕ – ачана сутма туяннă арçын ăна çÿп-çап купине пăрахса хăварнă.

Судра акушерка айăпне йышăннă. Ăна саккуна пăснăшăн кăна мар, професси, социаллă этикăна пăснăшăн та явап тыттармалла тунă.

Акушерка ачасене сутни 2013 çулхи утă уйăхĕнче çиеле тухнă. Йĕрке хуралçисенчен пĕр хĕрарăм пулăшу ыйтнă – вăл хăйĕн пепкине клиникăранах вăрланине тĕшмĕртнĕ. Чжань Шуся вара ачан ашшĕ-амăшне яланхи пекех чир пирки ĕнентернĕ. Сутса янă арçын ачана, сып-сывăскерне, кÿршĕ провинцире шыраса тупнă.

Кĕçех тепĕр провинцире йĕкĕреш хĕр ачасен шăпи уçăмланнă – вĕсен амăшĕ те маларах йĕрке хуралçисенчен пулăшу ыйтнă-мĕн.

Акушеркăпа пĕрле тепĕр тăхăр çын тĕлĕшпе следстви пуçарнă. Сутуилĕве конвейер евĕр йĕркеленĕ клиникăна пула темиçе чиновник пукансăр тăрса юлнă. Кăрлач уйăхĕнче центр ертÿçисен тĕлĕшпе приговор йышăннă. Ăна халăха пĕлтермен. Акушеркăна вара суд вĕлерме йышăннă.

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

# Саламлатпăр



*Çĕрпӳ районĕнчи Чурачăк ялĕнче пурăнакан Клавдия Леонтьевна ВАСИЛЬЕВĂНА 65 çул тултарнă ятпа пĕтĕм кăмăлтан хисеплесе, чунчĕререн, чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пирĕн анне Чурачăкри интернат шкулта чылай çул ĕçленĕ. Тăлăх, ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă кашни ачана хăйĕн тĕпренчĕкĕ пек юратнă. Интернат шкултан вĕренсе тухнă пур ачана та ас тăвать вăл, йывăрлăхсем сиксе тухсан май килнĕ таран пулăшма тăрăшать. Унпа яланах чуна уçса калаçма пулать.*

*Аннемĕр, тавах сана пире çуратса ӳстерсе çын тунăшăн, пирĕншĕн пĕтĕм ăшшуна, ырлăхна хĕрхенменшĕн. Пурнăçра малашне те çирĕп сывлăх, пархатарлă кун-çул пултăр.*

*Мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем Дашăпа Дима, хăтисем, тăхлачисем, тăванĕсем.*

## И-ХИ-ХИК

**Ыйхă килмен чух яланах цифрăсене хутлама пуçлатăп. Ултă хут улттă миçе пулнине шутланă май мĕнле çывăрса кайнине хам та сисместĕп. Кĕçĕр тем, ку та пулăшмарĕ. Çапла улттăран çиччĕ çине çитрĕм. Чим, миçе пулатчĕха? Ку меслетпе сыв пуллашма тивет курăнать – ура çине тăрса, çутă çутса, калькулятор шыраса çӳресе ыйхă пачах та çĕтрĕ...**

* * *

**– Санпа пĕрле выртсан çывăрса тăранаймастăп эпĕ – çур кравате хăв йышăнатăн.**

**– Тепĕр çурри сан валли юлать вĕт-ха.**

**– Юлать пулмасăр! Санăн пĕр енчен краватĕн чĕрĕк пайĕ, тепĕр енчен – тата тепĕр чĕрĕк пай...**

* * *

**Кĕл пике историйĕ çакна çирĕплетет – хитре пушмак пĕтĕм пурнăçа улăштарма пултарать.**

* * *

**Качча тухма ыйтрĕ пĕри. "Çăтмахри пек пурăнăн", – терĕ. Ыйтма хăрарăм-ха: мĕнле вăл – çăтмахри пек? Çаппа-çарамас, çара уран, ĕмĕр тăршшĕпех пан улми кăна çийĕп-и?**

* * *

**Вырăнти зоопаркра мулкачсем пĕтсен вырăнти сунарçăсем киле арлансем тытса тавăнма пуçланă.**

* * *

**"Симĕс çынна курсан мĕн тунă пулăттăр?" – ыйтăва çынсем тĕрлĕрен хуравланă.**

**60% ĕçме чарăнассине каланă.**

**30% ĕçме пуçлассине палăртнă.**

**9% психиатртан пулăшу ыйтассине пытарман.**

**1 хĕр кăна çул урлă каçма пуçлассине каланă.**

* * *

**"Авланакан каччă тарса çухалсан пирĕн саппас кӳнтелен пур", – çак сăмахсене, ăнланатăп-ха, шӳтлесе кăна カларĕç, çапах та халĕ эпĕ юлташсен туйĕсене ахаль хăна пек кăна çӳретĕп.**

* * *

**– Сана качча тухнă чух ухмах пулнă эпĕ!**

**– Чунăм, эпĕ вара, ахăртнех, суккăр пулнă, çакна асăрхаман.**

* * *

**Манăн гардероб ытти хĕрарăмăннинчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть.**

**1. Тăхăнмалли нимĕн те çук.**

**2. Ниçта çакма вырăн çук.**

**3. Кăларса пеме шел.**

**4. Саппас çӳлĕк – "тăрук начарланăп та..."**

* * *

**Арçын ĕçрен таврăннă.**

**– Чунăм, мĕн пĕçернĕ эсĕ паян?**

**– Нимĕн те.**

**– Ĕнер те "нимĕн те"...**

**– Икĕ кунлăхах хатĕрлерĕм.**

* * *

**Арçын киле ӳсĕр таврăннă. Арăмĕ – кухньăран:**

**– Мĕн ӳкрĕ унта санăн?**

**– Тумтир.**

**– Мĕншĕн ытла хытă шаплатрĕ?**

**– Эпĕ унран тухса ĕлкĕреймерĕм.**

* * *

**– Сана пин доллар парнелесен мĕн тăвăттăн?**

**– Малтанах шутласа пăхăттăм...**

## П Р О Д А Ю

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. Т. 89875766562.

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т.8-960-301-63-74.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**20.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдёте дешевле – уступим. Без вых. Т. 89625989686.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**24.ГРАБЛИ, косилки, сажалки, копалки,** окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33.Гравмассу, песок, керамзит, щебень,** торф. Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дёшево. **Т. 89373866629.**

**45.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ 20х20х40 – **33** руб., 9х20х40, 12х20х40; **кольца** колодезные всех размеров от производителя, по низким ценам – бурение, монтаж; песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, чернозем, КИРПИЧ в ассортименте. Д-ка. Т. 89196543499. Звоните!

**47.Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**52.Пластиковые ОКНА,** железные **ДВЕРИ.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: 89176529694, 89276679588.

**53.Отруби, зерно,** к/корм, сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**59.СЕМЕНА кормовой свеклы "ЛАДА"** высокой репродукции. Тел.: 8/8352/ 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60.СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: /8352/ 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

## П Р О Д А Ю

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы кованые.** Т. 89276689587.

**77.ТЕПЛИЦЫ: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**719.Блоки керамзитобетонные** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Т. 89176776846.

## УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 89373790080.

**96.Православный экстрасенс.** Т. 89876603929.

**99.Автоматические ворота, видеонаблюдение.** Т. 89278636398.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**70.Дом** с участком в любом состоянии. Т. 8-960-300-87-87.

**104.Бычков, коров, телок, овец,** свиноматок. Т. 8-937-014-49-97.

**587.Коров, бычков и лошадей.** Т. 89030659909.

## РАБОТА

**100.Требуются монолитчики.** Т. 89276678272.

## СУТАТĂП

**94.Хура-хăмăр тынашка –** мартра пăруламалла. Т. 89063849745.

## ХАЛĂХ СĂНАНИНЧЕН



**Нарăсăн 8-мĕшĕнче**

йытă хутланса выртсан – типĕ те янкăр çанталăка,

кушак чӳречерен пăхсан – ăшăтасса,

витери лаша çӳçене-çӳçене илсен – юр çăвасса;

**нарăсăн 9-мĕшĕнче**

мăйракаллă шултра выльăх хыçалти урипе шаккасан – юрлă кун кĕтмелле,

йытă юр çинче йăваланасан – çил-тăман тухасса,

çăлтăрсем тĕтре витĕр тĕссĕрĕн çутатсан – юр çуса тăнипе пĕрлех ăшăтасса;

**нарăсăн 10-мĕшĕнче**

мăрьерен çил шăхăрсан – сивĕтессе,

каçхине кăмакара çулăм хĕрлĕ тĕспе çунсан – çĕрле юр çумасть,

шăнкрав сасси аякранах лайăххăн та хыттăн илтĕнсен – кĕçех юр çăвасса,

**нарăсăн 11-мĕшĕнче**

юр шултран ӳксен – ăшăтасса,

чӳрече кантăкĕ тарласан – шăнтасса,

утă нӳрелсен – юр çăвасса;

**нарăсăн 12-мĕшĕнче**

юманлăх хуралсан – çилтăмана е ăшăтасса,

çĕрле пас тытсан – кăнтăрла уяртасса,

монстера чечек çулçи вĕçĕнчи шултра тумлам – ăшăтасса;

**нарăсăн 13-мĕшĕнче**

лайăх çанталăкра ĕнепе сурăх хăйсемех хӳттелле пырса тăрсан – юр çăвасса,

çил хыççăн вăрман шăплансан – сивĕтессе,

радио хумĕ ытти чухнехи пек мар чăрлатсан – улшăнса тăракан çанталăка;

**нарăсăн 14-мĕшĕнче**

алăк шашулкки çĕнĕ тутăхпа витĕнсен – çанталăк пăсăласса,

çĕрлехи çил кăнтăрла та чарăнмасан – çил-тăмана,

çилсĕр çанталăкра та вăрман шавласан – çил-тăмана;

**нарăсăн 15-мĕшĕнче**

сысна йывăç е юпа çумне пырса хыçкалансан юр çăвасса,

сысна çурисем нăриклетсен – шăнтасса,

вăрман шартлатсан вăраха пыракан сивве пĕлтерет.

«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИПЕ МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Çырăнмалли индекс: 11515

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 6 хут, "Чăваш хĕрарăмĕ"

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@chtts.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 21 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Тираж 8894. Заказ 441.